Владимир КУЗЬМИН

Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв

Повесть-водевиль

1

Виç çĕр киллĕ Чĕркуç ялĕн анат енĕ. Умра – тырă пуссипе чикĕленекен сад пахчи. Хушшинче – çул. Хĕрах енлĕ урам çурчĕсем. Сулахайра вăрăм пĕве кукăрăлса, сарăлса выртать. Хуралçă пӳрчĕ. Юнашарах – валак.

Çу пуçламăшĕ. Ир. Уйра трактор шавĕ илтĕнет. Шывра – хуркăвакал. Пахчара – шăпчăксен юрри. Уçă чӳречеренчăвашла ташă кĕвви янăраса тухать. Сылтăмра лаша тулхăрать, ача сасси илтĕнет: тр-р-р! Çав енчен пысăк курупка çакнă, сылтăм аллине пĕчĕк чăматан тытнă, плащ уртса янă Анатолий Микитов, ялта Анат Тули текен качча, васкамасăр утать, кăкăр тулли ассăн сывласа тавралла пăхса çаврăнать, хыçлă тенкел çине курупкине, чăматанне лартать, плащне хурать, ун хыççăн валак патне пырать, çăлкуç шывне ывăç тупанĕсене йĕкĕрлесе ĕçет, питне уфф-фăрр! тукаласа çăвать, аллисемпе хăлаçланса çăмăллăн сиккелет:

– Тинех эпĕ ялта! Каллех тăван çĕрте! Эх, епле чĕрĕ шыв эсĕ – тăван Чĕркуç шывĕ. Мана каллех чĕртрĕн эсĕ – тăван çĕр эмелĕ. Ах, чĕре сиксе тухать пуль. Чун юрлама пуçларĕ. Эх!

Пӳрт патне чупса пырать те вăл курупкине уçса баянне кăларать, ăна хул пуççи çинчен çакса ярать.

Çав вăхăтра пӳртре кĕвĕ сасси шăпланать. «Хоппа! Ăмăртас-ха шăпчăкпа!» – тесе хăйăклăрах сассипе юрласа ярать качча:

Çĕр-аннемĕн çăкарĕ
Тут парать мана.
Çĕр-аннемĕн кăкарĕ
Вăй кĕртет чуна.
Чĕркуç шывĕ - чĕрĕ шыв.
Эсĕ – ман тăван çĕршыв.

Чӳречерен утмăлалла çывхаракан Куçук Куçкин, сад хуралçин, мăн пуçĕ курăнать. Вăл тăрмаланчăк çӳçне пуклак пӳрнисемпе шăлкаласа якатать те хăлхине тăратсах итлет, хушăран анаслать.

Хăйне сăнакана асăрхаман-туйман Анат Тули малалла юрлать:

Пыл шăршиллĕ сывлăшĕ
Ӳсĕртет мана.
Хĕвелленнĕ сывлăмĕ
Лĕп чӳхет чуна.
Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв.
Эсĕ – ман тăван çĕршыв.

Ялта Валак Валькки текенскерĕн хĕрĕ Люба сулаҫайран çăмăллăн утса çывхарать. Хĕр çӳхе çитсă кĕпепе, йăлтăркка пушмакпа, кăтралатнă çӳçĕ çийĕн виç кĕтеслĕ тутăр çыхса янă. Аллинче – çап-çутă витре. Анат Тулине курнипе вăл йăкăлт çĕкленсе хаш! сывласа ярать, витрине лартать те качча хыçалтан хыттăн ыталать.

Куçук Куçки пуçне пăркаласа куçне хупать, асаилӳри хăйĕн юратăвне шухăш ытамне хупать.

Чунран хумханса юрлакан Анат Тули кăрт сиксе илет те юрлама чарăнать, çывăх çыннăн ачаш аллисен туйăмĕпе хавхаланса урăх юрă çеммине куçать:

Эх, Люба–Любка–Любушка–Любовь...
Çурăм хыçĕнчи савнийĕм,
Ан пытар куçна,
Çаврăнса хĕвел куллийĕ
Парнеле мана.

Хăйне каччи тӳрех сисĕмлĕн палласа илнишĕн хĕпĕртесе ӳкнĕ Люба, умалла çаврăнса, хавассăн чĕвĕлтетет:

– Таврăнтăн-и, Туля?

Хĕре сылтăм аллипе хăй çумнелле туртакан Анат Тули, ăнсăртран килсе тухнă тĕл пулу хăвачĕпе пăлханса ӳкнĕскер, çаплах лăпланса çитеймест-ха, хĕр куçне хăйĕн куçĕпе вăтанчăклăн хуптарнă май, савăккăн пĕлтерет:

– Таврăнтăм, Люба. Çитрĕм.

– Вĕренсе пĕтерсех-и?

– Дипломпах килтĕм, Люба.

– Ялах-и? Кунта ĕçлемех-и? - куçне каччă куçĕнчен вĕçертсе Люба умри телейне такам çак самантрах çаклатса каясран сехĕрленнĕн çине-çине ыйтать. – Урăх вара ниçта та каймастăн-и? Хамăр ялтах, Чĕркуçрах пурăнатăн-и?..

– Эх-ха-хай санпа, Любушка, чунăмçăм, итле тепĕр хут: ялах, хамăр тăван ялах килтĕм. Куратăн пуль?

Люба пуçне чиксе вăтанчăклăн калать:

– Куратăп-ха. Аллунтан тытсах, ыталасах тăратăп-çке. Эй турă, сана кĕтни. Сана аса илнипе чĕрĕм куç хупаймастăп, ыйхă таçта вĕçет. Юлашки çырăвна вуланă хыççăн юри çак çулпа киле çӳреме пуçларăм. Сана...тĕл пулас пекех... паян та...ĕнесене суса пĕтернĕ-пĕтермен. Васканипе, пуç минренипе... сĕт витрине лартма мансах тухса чупрăм фермăран.

– Пуш витре пек пушă чунпа кĕтсе илмерĕн пуль те эс мана, Люба, - шӳтлĕн кулса ярать Анат Тули.

Хĕр качча тата хĕрӳллĕреххĕн ыталать:

– Мĕн ухмахла калаçатăн эс, Туля? Хамăрăн Чĕркуç çăлкуçĕ пек тапса тăракан кăмăлпа кĕтсе илтĕм сана эпĕ, савниçĕм. Сана курнипе, эс юрланине илтнипе хамăн та сисмесĕрех чун-чĕре юрласа ячĕ. Кала-ха, сан ку çĕнĕ юрă-и?

– Çĕп-çĕнĕ, вĕр çĕнĕ, çĕнĕ-çĕнĕ юрă ку, Люба. Паян çуралнă юрă! Пуйăсра,

вакун урасисен кĕввипе, нихçан манăçман шăпчăк сассипе çуралнăскер. Хамăр ялта, çăл куç таппин янравĕпе çуралнă юрă! – Анат Тули баянне, майласа тытса, çăмăллăн туртса ярать, пуçне ухса юрлать:

Пахчари хĕрлĕ улмийĕ
Илĕртет мана.
Улмуççи айĕнчи хĕрĕ
Çунтарать чуна.
Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв.
Эсĕ – ман тăван çĕршыв.

Люба концертри пек алă çупать:

– Епле маттур-çке эс, Туля! Çĕнĕ юрă премьери пулчĕ ку: маншăн та, саншăн та. Ой, вăйлă!

Хăйĕнчен уйрăлнă хĕре Анат Тули сылтăм аллипе каллех хăй çумнерех туртать:

– Çĕнĕ юрă пуçламăшĕ кăна мар, çĕнĕ кун – хамăр юратăвăн çĕнĕ кунĕн премьери пулчĕ ку пирĕншĕн.

– Эх, ытла та ырă кун паян! – тесе ытамран вĕçерĕннĕ Люба çаврăнса ташласа илет. – Юрлас килет хамăн та. Манăн та сан валли чун парни пур:

Шывран таса пулаймăн
Тесе каланă ваттисем.
Манра усал кураймăн,
Иккĕленмесĕр итлесем:
Эпĕ шывран та тасарах.

Уйри çиле тытаймăн
Тесе каланă ваттисем.
Манран иртсе каяймăн,
Иккĕленмесĕр итлесем:
Эпĕ çилрен те шухăрах.

Хĕр юрри садри шăпчăк сассипе хутăш çилпе çырма тăрăх ялалла саланать:

Хĕвел сутийĕ – кун сути
Тесе каланă ваттисем.
Манра сан пурнăçун çути,
Иккĕленмесĕр итлесем:
Эп хĕвелтен те çутăрах.

Ылтăнпа çеç пуяймăн
Тесе каланă ваттисем.
Манран хакли тупаймăн,
Иккĕленмесĕр итлесем:
Эп ылтăнран та хаклăрах.

– Чăнах-и? Чăнах пулсан кил-ха кунтарах? – тăпăртатса илет Анат Тули.

Люба пуçĕнчи тутăрне салтса аллине тытать те ташă çаврăмĕ тăвать, унтан савнийĕн мăйĕнчен ыталаса Анат Тулине хы-ыттăн чуп тăвать, вара темрен хăранă пек аяккалла кайса тăрать.

Пӳртрен, кăххăмлатса, Куçук Куçки тухать, хул-çурăмне хускаткаласа анаслать:

– Ах, ҫыврӑна та ҫыврӑнӑ вара, турттарнӑ хупӑ, тутлӑ, савӑк тӗлӗк курнӑ. Тӗлӗкре Анат Тули авланнӑ пек...

Ӑна Анат Тули кулкаласа алӑ парать:

– Сывлӑх сунатӑп, Куҫкӑ пичче. Эп кунта ҫитнӗ чухне музыкӑпах хуп турттараттӑрччӗ ҫав. Курнах пуль асамлӑ тӗлӗкне те. Тен, пире вӑрттӑн сӑнанӑ? Эп авланнӑ пать-ха апла. Кама качча илтӗм-ши?

Люба витрине хӑма сак ҫумне кайса лартать, хӑяккӑнрах тӑрса, вӑтаннӑн пуҫне чикет.

Ҫынран ялан тӑрӑхлама юратакан Куҫук Куҫки чеен йӑхлатать:

– Хэ-хэ, хе. Хӑвӑн арӑму кам пулнине те сиссе юлаймарӑн-и? Валак Валькки йӗкӗреш виҫ чечекӗнчен варринчине татса илнӗччӗ-ха хӑй, тата манран мӑшкӑлласа юри пӗлмӗше персе тӑрать. Чуп туса кӑтартӑр-ха тепре? Эх, ҫамрӑкланса кайрӑм. Юрлас килет сан юррусене, Анат Тули, ҫампах Анатолий Микитов композитор юррисене магнитофон ленти ҫине купипех тулли ҫыртартӑм, хайне те, авӑ, хӑйӗн кӗввипех кӗтсе илтӗм. Каҫпа та, ирпе те кӗрлеттеретӗп. Эх, ак ҫапла:

Урхамахсем тӑраҫ тапӑртатса...

Анат Тули баянне туртса ярать. Вӗсем ҫумне Люба та хавассӑн хутшӑнать:

Ҫилхи вӗҫӗсене вӗҫтерсе,
Тӑван патне килтӗм хисеп туса,
Инҫе ҫула паян кӗскетсе.

Ҫывӑхрах лаша кӗҫеннӗ сасӑ илтӗнет. Вӗсем патне Лар Иванӗпе Сава Савви васкасах ҫывхараҫҫӗ, Анат Тулине ик енчен ыталаса чуп тӑваҫҫӗ те пӗрле юрра хутшӑнаҫҫӗ:

Чунтан савӑнар, тӑвансем,
Пӗрле пулнӑ чух савӑнар,
Чунтан савӑнар, савӑнар,
Пӗрле пулнӑ чух савӑнар.

Чӗркуҫӑн хастар каччисем Анатолий Микитов, Иван Ларин, Савва Савалаев тата Веналий Коновалов пӗр вӑхӑталлах ҫуралнӑ, ял-йыш хушшинче пӗрле ӳснӗ, вӑтам шкулта пӗрле вӗреннӗ, пӗлӳ тӗнчинче ҫеҫ кашни хӑй сукмакӗпе утнӑ, пурнӑҫ ҫулӗ вара вӗсене тӑваттӑшне те тӑван кӗтесе – «Ҫӗнтерӳ» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха туртса килет. Ҫирӗм пиллӗкре ҫеҫ-ха вӗсем, ҫапах хайсен пултарулӑхне кӑтартма ӗлкӗрнӗ. Лар Иванӗ – тӗп агроном, Сава Савви – инженер-строитель, Анат Тули – мусӑкҫӑ, Кӑнавал Веналийӗ – этем тухтӑрне вӗренет.

– Вӑт мӗнле! – аллинчи чӑпӑрккипе шартлаттарать Лар Иванӗ. – Пӗрле пулнӑ чух савӑнар, тӑвансем-юлташсем. Куҫкӑ кукки, Туля таврӑннӑ ятпа ҫапса уҫ-ха вун ик кӑшӑллине? Сан унта-кунта йӑваланкаласа выртаканччӗ пӗр-пӗр пичке.

– Эп ҫиччас, – кутне ҫат ҫапать Куҫук Куҫки. – Малалла! Ара вӗсен туй паян. Туй. Валак Валькkине пуҫлаттармалла туй пичкине, мана мар, шӑллӑм. Унччен ...унччен вара... – Любӑн пуш витрине йӑтса валак патнелле йӑпӑртатать. – Унччен ҫакна ӗҫмелле.

Хӗрелнӗ пит-куҫне ал тупанӗсемпе хупланӑ Люба лайӑхмарланать:

– Куҫкӑ пиччен ялан куласси ун. Пустуйранах тем туйӗ шутласа кӑларать.

Анат Тули те савнине ҫӑласшӑн:

– Мӗн, эпир, эсир ҫитиччен анчахрах, ҫакӑнта тӗл пулсан, чунтанах юрласа тӑраттӑмӑрччӗ те...

– Юрлани вăл лайăх-ха, анчах... – Сава Савви Анат Тулине çурăмĕнчен сисĕмлех шаплаттарса илет. – Яла килесси çинчен пире пĕлтерменшĕн сана, туссен ячĕпе ку.

Лар Иванĕ чăпăрккипе юнаса шартлаттарать:

– Ак ку та лекме пултарать пирĕнтен уйрăлсан. Евитленĕ пулсан, илме Вăрнар станцине тур лашапах тухаттăмăр.

– Сирĕнтен, шăпăрлансенчен, пурне те кĕтме пулать. Итлĕр-ха, ăнланăр мана. Чăрмантарас килмерĕ. Баяна йăтса çитетĕпех терĕм. Эпĕ Вăрнара çитмен, Апнеркăрах анса юлтăм. Телее пула шăпах кӳршĕ ачи Кульцавран таврăнать. Разъездран тухсанах хуса çитрĕ те вăл мана... Кĕсрене юрттарса, баян каласа, юрласах килтĕмĕр. Тихи хыçран чупса пырать. Вĕсем те савăнса юрлаççĕ: амăшĕ кĕçенет те, ачи те...

Сава Савви ăнлантарма пикенчĕ:

– Халь машин çăкăрĕ шутсăр хаклă та, Александр Ильич ăна, агронома, личнăй транспорт – тăрантас çирĕплетсех панă-çке. Кулăшла мар-и хальхи пурнăçра? Эрне хушши вĕренчĕ вĕт лаша кӳлме. Первăй класс халь. Вăрнарта автоинспектор пĕрре штрафланисĕр пуçне урăх айăпа кĕмен. Ямшăк, во! Çĕр тухтăрĕ, во! Хуçалăх ларĕ те тулли – ял çыннин ларĕ те тулли. Кăмакара хура çăкăр та, кулач та пиçет, вут умĕнче çатма икерчи те çатăртатать.

– Лар Иванĕн ларĕ те çăнăхпа чăп тулли. Валак Валькки пӳрчĕ те хĕр тулли, – Куçук Куçки тулли витрене пĕчĕк сĕтел çине пырса лартать те, «Эх!» тесе хăпартланнă хыççăн, уççăн юрласа ярать:

Хур кайăксем пĕрле пуханнă чух
Çуначĕсем каяç ирĕке.
Тăванăмсем пĕрле пуханнă чух
Кăмăлăма ярам ирĕке.

Пурте пĕрле юрлаççĕ:

Чунтан савăнар, тăвансем,
Пĕрле пулнă чух савăнар...

Куçук Куçки пӳртелле вашкăртса кĕрсе каять:

– Эп çиччас...

Анатран Валак Валькки Лилийĕпе Вероники алăран тытăнса çитеççĕ. Пĕвĕпе те, сăнĕ-пичĕпе те йĕкĕрешсем виççĕшĕ те пĕр пекрех. Пурте пĕр тĕслĕ, пĕр пек çĕлеттернĕ кĕпе, пĕр тĕслĕ пушмак тăхăннă. Чĕлхи-çăварĕ çеç уйрăмрах. Люба çемçен калаçать. Лили пăтăр-пăтăртарах. Вероника çинçе саслă.

Йĕкĕрешсенчен иккĕшĕ те умлă-хыçлă саламлаççĕ:

– Туля килнĕ-çке? Сывах-и?

– Аван-и?

Анат Тули вĕсем умне çывхарать:

– Аванах. Сып-сывах. Уйрăлми йĕкĕрешсем еплерех чуптараççĕ? Хăшин туйне маларах кĕрлеттерĕпĕр-ха?

– Эпир пурте пĕрле качча тухатпăр, – ихиклетет Лили.

– Виççĕмĕр те пĕр кунта, – юрланă пек тавăрать Вероника.

– Лар Иванĕпе Сава Савви тата Анат Тули пĕр харăсах çуршар метр тăршшĕ майăх çитĕнтерсен.

Лар Иванĕ чалтах сиксе илет:

– Апла пулсан эп ырантанах хырăнма пăрахатăп.

Сава Савви пуҫне ухать:

– Эп – паянах.

Анат Тули ăмси айне пӳрнипе сăтăрса: -

– Сирĕнтен эпĕ те юлмастăп.

Пӳртрен Куҫук Куҫки шур эрех кĕленчи йăтса тухать, хуллен сĕтелваррине лартать:

– Ман та ӳстерес пуль мăйăх-сухал. Ман та арăм ҫук. Тен...

– Арăм ҫук та, парăм ҫук теҫҫĕ марччĕ-и-ха, кукки? – йĕкĕлтет Лар Иванĕ.

Пурте ахăлтатса кулса яраҫҫĕ.

– Ача чухне, – тет кулма чарăнса Куҫук Куҫки, – анне чĕччи тутлă, авлансан - арăм тути пылак. Хăвăртрах тутанса пăхăр пылаклатас тесен. Авă епле йăлкăшса ҫиҫсе тăраҫҫĕ. Ҫăлтăр пек. Эх, хам ҫамрăк мар...

Ҫамрăксем пĕр-пĕрин куҫĕсенчен пăхса йăлл кулаҫҫĕ.

– Мĕн шăл йĕретĕр? Сĕтел кĕтет авă. А ну-ка, кашăк-чашăк, курка-алтăр илме! – аллипе кутне ҫат тутарать Куҫук Куҫки. – Малалла!

Йĕкĕтсем сад хуҫи хыҫҫăн пӳрте кĕпĕрленсе кĕрсе мĕн хушнине илсе тухаҫҫĕ. Хĕрсем сĕтел ҫине ĕҫмелли-ҫимелли хатĕрлесе-майлаштарса лартаҫҫĕ, хушăран-хушă каччăсем пирки шӳтлеҫҫĕ:

Лили, Любăна куҫран пăхса:

Анат Тулин пур баян,
Савăнсах калать паян.
Чунĕпе вăл пит пуян –
Ĕҫ тăвас пулсан – наян.

Вероника Лилине тĕртсе калать:

Сава Савви савалать
Савапа мар, чĕлхипе –
Хăйăртан кермен лартать.

Люба Вероникин каччинчен кулать:

Лар Иванĕ выляман
Хĕрсемпе ку таранччен –
Ҫавăнпах пуль авланман.

Ахăрашу малалла тăсăлать. Каччисен – хăйсен халапĕ:

– Юрать сана итлерĕм, Иван тусăм, – тет Сава Савви. – Тур ăйăр кӳлнĕ «лимузинпа» ларса килтĕм. Кăшт мухмăр пекки пурччĕ те... Мĕнле хăватпа сĕвĕртсе ярас кăна тесе пуҫа вататтăм.

– Лили патне йăпшăнса кĕреттĕнччĕ ĕнтĕ, – юлташне айăкран тĕртет Лар Иванĕ. – Аптекăра сан валли тупăнатчех пуль мĕнле те пулин эмел-шĕвек. Хуҫийĕ пуян-ха.

Вĕсене тăнлакан Лили сылтăм алăри пас пӳрнине икĕ пӳрне хушшипе кăтартать:

– Шиш горох...

– Касторка пур унта сире валли, – куҫне хĕссе кулать Вероника. – Пуш кĕленчене ытлашши ыталас вырăнне... Ихи-хик!

Вĕсене паҫăртанпах йĕплĕ ҫăмах ҫитерме хатĕрленсе тăракан Куҫук Куҫки те чăтаймасть:

– Ҫут кĕленче вырăнне хамăра куҫ курми пуличчен ыталăр тесшĕн вăл. Эх, хĕр пĕрчисем, ҫĕр ҫырлисем. – Кушак аҫи пек чеен пăхса, ҫăра харшă айĕнчи

ясар куçне мăч хупса илет. – Ларăр, атьсем, сак çине, сĕтел хушшине. Анат Тули яла культурнă вĕренсе таврăннă ятпа культурăллă ларар пĕрре. Турă та касартăр пире, ял хуçи Ильин та, халăх та. Эпĕр авалхи йăлапа...Ак çапла. – Чечеклĕ йывăç алтăрпа витререн шыв ăсса илет. – Ял пуçĕ – аслă пуç, Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв, пирĕн пырĕ – йăнкăр пыр. Ак çапла, сыпса пăхар черетпе. Ку симпыла ялтан аякка тухса каякан çын чун каниччен ĕçсе кайнă, яла таврăнакан, килне çитиччен çакăнта çитсе ĕçнĕ. Ĕмĕрепе вăй панă вăл Чĕркуç çыннине – чăваш çыннине. – Ĕçет те алтăра Анат Тулине тыттарать. – Яр малалла. Тавсси.

Шăла тивекен шыва пурте черетпе ĕçеççĕ.

Сăра-эрехе хирĕçлейменнине пула хырăмĕ хăш вăхăтра мечĕкленсе кайнине сиссе юлайман Савва Савалаев, эрех кĕленчи çине ăмсануллăн пăха-пăха, пуç пӳрнипе шăклаттарса илет:

- Мĕн вăл çăлкуç шывĕ? Шăла тивет те, хырăма шăнтса ярать. Малтан кăштах хĕртмелле пуль...

– Эй, санпала, – сиввĕн пăхса илет ун çине Куçук Куçки, – чăтаймастăн тăк, атя, уç. Ятне тăвар. Яр та, тĕпне хăвар, Савва. Атьăр, атьсем, çавар-и Анат Тулине?

– Хайне мар, ромбикне çавар, Куçкă пичче, – тӳрлетсе калать Вероника.

Лар Иванĕ Анат Тулине ыталать:

– Ăçта-ха вăл сан институт палли? Пиншакку çинче курăнмасть.

Черккене пушатнă Сава Савви кĕлеткине чĕтретсе:

– Тинех пулчĕ, – тет. – Мĕн тесшĕн эп, мĕн... Халь ĕнтĕ хĕрарăм ача çуратма пăрахнă пекех, ромбик çакса çӳресси те модăран тухрĕ пуль. Выпускной вечерта эпир те пĕрне-пĕри çакса янăччĕ ăна, мухтанса та хăпартланса пăхаттăмччĕ куç айĕн, киле килсен, вăтаннипе, вĕçертсе хутăм.

Куçук Куçки ăна пӳрнипе юнать:

– Тĕрĕс мар тунă эсĕ, Савва. Енчен те патшалăх панă пулсан сана çав хаклă палла, пирнешкел неучсем хушшинче кăкăра касартсах çакса çӳремелле ăна.

– Çапли çаплах пуль-ха вăл, кукки, – юлташне хӳтĕлес тесе-ши, çамкине шаккаса хушса хурать Лар Иванĕ. – Аслă пĕлӳ палли çыннăн кăкăрĕ çинче мар, çамки çинче пулмалла.

Анат Тули чăматанĕнчен академи паллине кăларса сĕтел çине хурать. Ăна Куçук Куçкипе хĕрсем черетпе тытса пăхаççĕ.

– Ай епле хитре-е...Герблă, – ăмсанать Лили.

– Эпĕ кĕтнĕ пурнăç палли... – ассăн сывлать Люба.

– Канешнă. Диплом илес-тăвас пулсан-и, сирнешкел вăтанмастăп, орден пек йăлкăштарса çӳретĕп. Панятнă? Ялти çĕвĕ фабрикинче те дипломлă инженер кирлĕ. Атту халь эпир пурте аякран килнĕ ют çын вĕрентнипе ĕçлетпĕр. Хамăрăн вĕренмелле, хамăрăн пуçпа шухăшласа тумалла ĕçе. Çынна шанса ларнипех пулмасть. Кăçалах институтa вĕренме каяп, – çирĕппĕн татса калать Вероника.

Сава Савви ромбике черккене шăмп! тутарать те хуçине тĕпне çитиччен ĕçме хистет. Анат Тули черккене пушатса ромбике шăлпа туртса кăларать. Люба ромбике каччин кĕпи çине тирсе ярать:

– Ан вăтан, Туля. Кĕпӳне шăтарнăшăн та ан кулян.

Сава Саввин куласси:

– Арăму пулсан вăл Люба çĕр кĕпе илсе парать сана.

Кăмăлĕ çĕкленнипе Куçук Куçки хăлаçлансах калаçать:

– Маттур, Туля шăллăм. Ялта халь эс, виç çĕр килтен аслă пĕлӳ илнĕ çын

аллă пиллĕкмĕш пулатăн. Так шту, шăллăм, пирĕн авалхи йăха, Кашкăр йăхне, пуйтартăн. Чĕркуç ялне чĕртрĕн. Ял пирĕн çак çырма пуçне, çак çăлкуç çумне, ахальтен ларман. Çĕр çинчи чĕп-чĕрĕ куç вăл – пирĕн тăван Чĕркуç. Епле хĕремесленсех, ура тапсах юрларăн-ха эс паçăр, Туля, э? «Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв, эсĕ – ман тăван çĕршыв», – терĕн-и-ха...

– Хоппа! Хамăрьялла! – тет те Анат Тули çăмăллăн баянне алла илет, хăйĕн янăравлă сассипе юрласа ярать:

Тăван килĕм çăкăрĕ
Тут парать мана.
Тăван аннемĕн кăкăрĕ
Вăй кĕртет чуна.

Юнашар пырса тăнă Люба ăна пулăшать:

Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв,
Эсĕ – ман тăван çĕршыв.

Юрă вĕçленсен Сава Савви вĕсене çапла мухтать:

– Ой, ку юрра ял юрри, ял гимнĕ туса хума та юрать.

Куçук Куçки шывланнă куçне сăмса тутрипе шăлса типĕтет те:

– Эх, эсир, туссем-маттурсем, – тет. – Сирĕн çине пăхап та, хĕпĕртенипе, куççуль пăчăртанса тухать. Ытла та туслă-çке. Тепри, тăваттăмĕшĕ, Кăнавал Веналийĕ пулсанччĕ халь çакăнта...

Лар Иванĕ аллипе тухăçалла тĕллесе:

– Килет вăл та, ялах таврăнать тет. – Медфак хыççăн ординатурине вĕçлет те, ромбикпех килсе çитет çăлкуç çумне. Ăна та çак алтăртанах çĕр симпылне ĕçтеретпĕр. Ун ромбикне те пĕрле çăватпăр. Савва ăна валли кĕçех пульница çуртне туса пĕтерет. Тĕп врач, ял тухтăрĕ пулать вăл.

Пуçне пăрсах итлекен Куçук Куçки хăйĕн шухăшне эртеле пĕлтересех тет пуль çав, ĕнсине хыççах калать:

– Кăнавал ачинчен коновал мар, этем тухтăрех пулать-ха апла. Ашшĕ самай мухтанать. Эп хам та ялта пĕрремĕш тухтăр – выльăх тухтăрĕ пултăм, ачам та ялта пĕрремĕш тухтăр – этем тухтăрĕ пулать тет.

Аптека хуçин Лилин те тарăн шухăш:

– Кăçал университета кĕреймесен эп...чисти сĕм ухмаха тăрса юлап. Тухтăр пулаймасан... Йăлăхрăм аптекăра. Ни путлĕ эмелĕ çук, ни çынна пулăшмалли ытти хатĕр-хĕтĕрĕ ... таçта такам ултавлă майпа туса кăларнăскер. Йăлт подделка.

– Сава Савви майри пулатăн та ак... Упăшкун личнăй фармакологĕ пулса тăратăн, нимле подделкăсăр, тап-таси. Пуçланать вара университет – пурнăç университечĕ, – иккĕленет Лар Иванĕ. – Ача...

Лили ăна тӳрех пӳлет:

– Иртерех -ха çемье пирки каласма. Хăрап эп унран. Савва мана пур пĕр: «Эп аслă пĕлӳ илнĕ, эс ятарлă вăтам пĕлӳпе çеç», – тесе тĕкме пултарать, çăвар та уçтарас çук. Хаяр вăл...

Аптранă Сава Савви куçне-пуçне чалкăштарса пăрахать:

– Мана çапла хăртатăн-и эс, Лиля? Эпĕ-и? Ĕмĕрне те унашкал кӳрентермĕп сана. Килĕшен тĕк – паянах авланма хатĕр.

– Çитет сире! – чарса лартать тавлашăва Люба. – Ман та зоотехника вĕренес килет.

Ура çине сиксе тăнă Куçук Куçки тĕп сăмахне калать:

– Шăпланăр пурте! Çак паянхи кун культура паллине паллă тунă хыççăн, эпĕ Анат Тулине, Микитов Анатолине, ял министрне лартасшăн. Культура министрне. Вĕренттĕр вăл ял халăхне чăн чăваш культурине, вырăс культурине, тĕнче культурине. Çавăнпа юрлар, ташлар, савăнар пĕрле:

Чĕкеç патне чĕкеç пуçтарăнсан,
Пĕтĕм чĕкеç чĕри савăнать.
Тăван патне тăван пуçтарăнсан,
Пĕтĕм тăван чĕри савăнать.

Пурте юрлаççĕ:

Чунтан савăнар тăвансем,
Пĕрле пулнă чух савăнар...

Урхамах кĕçенни илтĕнет. Лар Иванĕ чăпăрккине шартлаттарса васкатать:

– Авă, тур ăйăр та чĕнет. Çитет пуль кăнтăр кунĕнче яла янраттарса. Хуça çумĕ ячĕпе хÿтермеллех пулать сире. Пирĕн ĕçлемелле. Тулян ашшĕ-амăшĕ патне çитсе канмалла. Авă, тимĕрçĕ лаççинчен ашшĕн мăлатук сассийĕ илтĕнет. Ашшĕ ăна мăлатук çапма чĕнет. Васка, Туля.

– Хĕрсем, сĕтел çинчине пуçтармалла! – хушать сад хуçи.

Юрă вĕçленсе пырать:

Сар кайăксем пĕрле пуçтарăнсан,
Юррисене вĕçлеймĕç ниепле.
Тăвансемĕр пĕрле пуçтарăнсан,
Уйрăлассăм килмест ниепле...

2

Хурал пÿрчĕн чÿречинчен Анат Тули пăхса ларать. Пĕверен илтĕнекен шапа шавĕпе садри шăпчăк концертне вăл каçăхса тăнлать, баянне нăртлаттарса-нăртлаттарса илет те хушăран хут çине нота паллисене кукăрткаласа хурать. Валак умне унăн ирхи юратăвĕ Муза акăшла ярăнса тухать, чăваш ташшин кĕввипе юха-юха çаврăнать. Тĕлĕнтермĕше асăрханă Анат Тули ташă кĕвви калама пуçлать. Чÿрече умне вĕçнĕ пек çитсе тăнă Муза сылтăм аллине çĕклесе саламлать:

– Ырă ир пултăр, маэстро! Эс кунта мĕн тăватăн?

Анат Тули баянне лартать:

– Сад пахчи хуралласа тăп. Куçкă пичче Вăрнара разливной эрех илме кайрĕ те...

– Ĕçме пăрахаймарăн-и-ха? – куларах калать Муза.

Анат Тули çÿçне тăрмалать:

– Пушшех ĕçме пуçларăм.

– Хăçантанпа?

– Иксĕмĕр юлашки хут чуп тунăранпа.

– А-а-а? Астăватăп. Манман. Мĕн ĕçетĕн-ха?

– Шыв ĕçетĕп.

– Атăл шывĕ-и е аншарли?

– Ăна та, кăна та мар, хамăр шыва – Чĕркуç шывне, çăлкуç шывне ĕçетĕп. Ăна ĕçсен эсĕ те юмахри пек улшăнатăн, акă, – Анат Тули хĕре çавăтса чуптарать, ăна тулли алтăр тыттарать.

– Муза ыхыхлатса ĕçет тăрă шыва.

– А-а-ах, чуна уççах ячĕ ку шыв. Епле сĕтеклĕ. Сивĕ пулсан та, ăш-чике

шăнтмасть. Ух, ҫан-ҫурăма уҫăлтарса ячĕ, кĕлеткене ҫăмăллантарса ҫĕклентернĕ. Ҫĕнĕ вăй кĕрсе пырать.

Чĕререн ҫаплах тухса ӳкеймен юратăвĕ умĕнче Анат Тули хавхалануллăн мухтанать:

– Ҫапла ҫав вăл пирĕн тăван ҫĕр сĕткенĕ! Темле эмелрен те хăватлăрах. Мана та сиплерĕ вăл, ҫĕнĕрен чĕртрĕ. Ҫунат хушрĕ. Чĕрене сиктерчĕ. Чуна вăратрĕ. Вĕренсе килнĕ хыҫҫăн ялта ĕҫлеме пуҫланăранпа виҫĕ юрă ҫыртăм. «Ҫăлкуҫ» ансамбль йĕркелерĕм. Вăйлă ташăҫсем ҫеҫ ҫукрах-ха, вĕреннисем. Хамăр пултарулăха районти кашни ялта кăтартасшăн. Унтан вара... Шупашкарта кĕрлеттересшĕн пĕр чаплă концерт.

Муза хыпăнса калать:

– Пирĕн Чăваш патшалăх ансамбльне куҫатăн та ĕҫлеме... вара...

Анат Тулишĕн ку аҫа ҫапнă пекех пулчĕ пулас, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе, тарăннăн сывласа ярать:

– Ах... Мда... Юрăпа ташă ансамблĕ... Мухтавлă коллектив. Чаплă ентешĕм, Вăрманкас йĕкĕчĕ, талантлă Юрий Васильев ертӳҫĕ, хальлĕхе никампа улăштарми вăйлă дирижер. Кĕвĕри, музыкăри ман пурнăҫ пуҫламăшĕ. Баянистсен оркестрĕ. Пире хавхалантарса тарлаттаракан Валентин Сизов. Шăп вăхăтлах пачĕҫ ăна Чăваш халăх артисчĕ ятне. Пĕр баянист та танлашаймастчĕ ун пултарулăхĕпе. Шăпчăк-юрăҫсем, ҫунатлă ташăҫсем... Терпсихора... – хĕр умне ҫаврăнса тăрать те юрă кĕввипе хавхаланса калать: – Муза, Муза, виҫĕ муза – маншăн виҫ хавхалану, маншăн эсĕ виҫ ҫăлкуҫ: Шухă шухăш, Асăну, юрра хывнă Юрату...

Ăшшăн та лăпкăн итлекен Муза Анат Тулине чăп чуптуса илет:

– Мĕншĕн виҫ ҫăлкуҫ-ши эпĕ, Анатолий? Ăнлантар-ха? Ҫĕркаҫ эп клубра ташланă чухне темшĕн алă ҫупмарăн-ҫке? Ансамбль концерчĕ хыҫҫăн та мана ăсатмарăн-ҫке? Кӳрентĕм. Хытах. Эпĕ... Эпир вĕт юри килтĕмĕр ҫак Чĕркуҫне. Сана хамăр ҫинчен аса илтерме...Сан чунна астарса илĕртме килтĕмĕр. Юрий Васильевич ҫул тăршшипе ҫавăн ҫинчен калаҫтарса пычĕ пире. Эпĕ... Эй турăҫăм, каҫар мана. Эпĕ вĕт... Ах... Эсĕ мана юратнине пĕлетĕп. Халĕ те юрататăн вĕт? Куҫунтанах туятăп. Ултав хĕлхемĕ йăлкăшмасть. Эпĕ саншăнах юлтăм. Сана пулах каймарăм хамăрăннисемпе Вăрнара, хăна ҫуртне. Клубра ҫĕр каҫрăм. Ирпе сана шырарăм: хăвăр килте, урамра... Тупрăм. Ял куҫлă ҫеҫ мар, хăлхаллă та темелле-и?

Анат Тули хĕре ҫавăтса пӳрт патнелле уттарать, калаҫса пырать:

– Эх, юрату, юрату, вилмест ҫав сан хăвату. Муза, Муза, виҫĕ муза – маншăн виҫ хавхалану, маншăн эсĕ виҫ ҫăлкуҫ...

– Ҫаллех ăнланмалла мар-ха, – тесе Муза сак ҫине ларать.

Каччă ăна куҫ вăйĕпе тыткăнласа илет те баянне хул пуҫҫинчен ҫакать, «Ҫиччас ăнлантарап, итле», – тесе юрласа ярать:

Чăваш ҫĕрĕн кăра хĕрĕ
Ҫунат сарчĕ ташăра.
Йăваш каччă ылтăн ҫĕрĕ
Парнелесшĕнччĕ ăна.

Анчах ташăҫ акăш пулчĕ,
Вĕҫрĕ кайрĕ тӳпене,
Савăнмашкăн кĕрсе ӳкрĕ
Алтăр Ҫăлтăр ытамне.

Хĕр хăварнă хумăн хĕмĕ
Ытамларĕ каччăна.
Чĕринчи асамлăх сĕмĕ
Ĕмĕр юлчĕ тыткăнра.

Асран тухмĕ халĕ уншăн
Вутлă виç хавхалану –
Алтăр Çăлтăр валла уçнăн
Вĕри шывлă виç çăлкус:
Шухă шухăш,
Асăну,
Юрра хывнă Юрату.
Ăнланмалла-и халь?

– Юррине кам çинчен çырнине тÿрех пĕлтĕм, – ура çине сиксе тăрать Муза.– Ман çинчен.

– Тĕп-тĕрĕс. Сан çинчен те, хам çинчен те çыртăм. Эх! Эсĕ сцена çине пĕрремĕш хут ташлама тухсассăн... Хоппа!

– Оркестрта баян калаканскер эсĕ чалтах сиксе тăрса манпа çаврăнма пуçланăччĕ. Уншăн сана кайран ят та тивнĕччĕ.

Анат Тули пуçа пăркаласа аса илет:

– Усал ячĕ ĕнтĕ вăл... ячĕ хытах лекрĕ: пуçран та, кутран та. Юрий Сизов мана хÿтĕлерĕ, «Эксперимент туса пăхма шутланаччĕ», – тесе суйрĕ ансамбль ертÿçине. Юрий Васильевича та улталаймăн, иксĕмĕре те вăрттăн чышкă юнаса кăтартрĕ. Эх, Муза, эп сана хам майлă çаврасшăн мĕн кăна тумарăм пуль. Эп сана хамăн мăшăрăм тăвасшăн мĕнле кăна хаяр вутра çунмарăм-ши? Эп сана...

Каччă сăмаххисемпе ирĕлсе кайнă Муза хĕрÿлĕхне ниçта хураймасăр Анат Тулине калаçа-калаçа чуп тăвать:

– Эп сана çĕркаç клубра юлатех пуль тесе юри чире петĕм. Автобусра хăсма пултаратăп тесе... Манăн кунта тăвансем пур тесе суйрăм Юрий Васильча. Хăвах пĕлетĕн, манăн Чĕркуçра, сансăр пуçне, никам та çук. Эсĕ... Хăçантанпа савăшасшăн санпа. Туятăн-и? Ан хăра. Ан вăтан. Атя хăвăртрах пÿрте. Хуралçи киличчен...

Аптранипе Анат Тули баянне нăртлаттарса ярать:

– Выçса çитнĕ пулсан та ясарлăх апатне тутанма тăхтар-ха, Муза, чăтар, вăхăт мар. Атя луччăккăн ташлар. Эсĕ маншăн, Муза, музыка пулнă. Эсĕ маншăн, Муза, хавхалану çăлкуçĕ. Санра, Муза, манăн кăмăл-сисĕм туйăмĕ шăраннă. Авалхи грексен халапĕнчи пек, хавхалану Турри пулнă эсĕ. Маншăн эсĕ – ташă турри Терпсихора та. Маншăн эсĕ – юрă турри Мельпомена та. Маншăн эсĕ – виç хавхалану çăлкуçĕ: Шухăшлав та, Асăм та, Юрă та... Акă, итле-ха:

Хурланать-çке хурăн,
Тухнăн сас-хура.
Хăрăмпа пит çурĕ.
Вăл паян хура...

– Ан юрла ку юрра – кивелнĕ юрра, – тесе Муза çемçе ал тупанĕпе йĕкĕт çăварне хуплать. – Ман паян савăнас килет. Халех.

– Ма кивелнĕ? Пĕртте кивелмен. Виталий Петров сассинче епле шăранать вăл, ман юрă? Чунне парса юрлатчĕ вăл ăна. Шел, халăх артисчĕ ятне тивĕçлĕ-

скер ёмёрлёхех чăваш халăхне хайпе пĕрле юрлаттарса асăмра пурăнать ĕнтĕ вăл. Уçăмлă, хăватлă сасă панă ăна Турри.

– Пĕлетĕп. Каçар мана. Эпĕ уншăн мар. Юраçи маттурччĕ-ха. Пĕрле концертсем те лартаттăмăр ялсенче. Сăмаххисем... пĕртте килĕшмеççĕ çак самантра. Поэтне те кăмăллатăп. Кервен Васçи вĕсене çирĕп вĕрен пекех явнă – юман кĕрешĕ пек Петров валли ятарласа çырнă тейĕн. Анчах та... хăрăмпа мар, çăлкуç шывĕпе пит çурăм эпĕ паян, кур-ха, сан умăнта чăнах улшăнса тăтăм – тин çеç папка кăларнă хурăн пекех. Çавăнпа тунсăхпа мар, савăнăçпа ташласшăн эпĕ паян. – Çулçă пек вĕлтĕртеттерсе ташша тухать, баянисчĕ патне çаврăнса пырса калать. – Ансамбльте эс ман урасене-пĕçсене питĕ-питĕ курасшăнччĕ. Эс ялан ман урасемпе ачашланса вылясшăнччĕ. Кур халь. Тыт! – Çаврăна-çаврăна каччă умĕнче тăпăртатса илет, ăна астаруллăн тутинчен чуп тăвать. – Хитре-и эп?

Çав хушăра хыçалта Лар Иванĕпе Сава Савви курăнса каяççĕ. Иванĕ юлташне утма чарать:

– Цă-цă, вăт ку артисткăн ура та ура... ах... Çĕркаç концертра мала лекеймерĕм. Куçкă куккисем ват мучуксемпе çăвар карса лараççĕ те унта...

– Эс хуллентерех, – пÿрнипе юнать Сава Савви. – Пăхса тăрар-ха чун каниччен. Тулян чупукки-чиперуккиех пулмалла ку. Тахçан ĕлĕк-авал ман хăлхана та кĕнĕччĕ вăл пĕр Терпсихорăшăн хăрса ларма пуçланă тенине. Вăйлă, шуйттан. Кĕлетки шăратса кăларнă пек. Епле явкаланать. А-а-ах. Юрату ташшинче те хайпе пĕрлех вĕçтермелле. Кам савăнать-ши унпа?

– Паллах, эс мар. Сан хăвăн Лили пур, – йăл кулать юлташĕ.

– Эс те мар, Савва. Сан та Вероника пур. Туля ташлаттарать авă ăна. Пултарать мур ачийĕ. Вăт сана виç пуçана. Çаклатса кайĕ те тусăмăра...

Вĕсем патнелле Анат Тули йăйăр пек пуçне уха-уха çывхарать:

– Мĕн пире вăрттăн сăнатăр? Пăшăл пăтти пĕçеретĕр? Килĕр кунтарах! Нука, ташлăр пĕрле. Хоппа!

Йĕкĕтсем Музăпа пĕрле ташлаççĕ, кашниех ăна ыталасшăн. Машина сасси илтĕнет. Кĕç мăн сумка йăтнă Куçук Куçки хашкаса çитет, кĕвĕ çеммипе çунатланса хуçкаланать. Анат Тули хуралçă еннелле çаврăнса пĕлтерет:

– Дежурство культурăллă шайра иртет. Сире, Куçкă пичче, Шупашкар майри кĕтет.

Куçук Куçки те аптăрасах ÿкмест, хĕре куçĕпе ыталаса илет:

– Çак чиперкке-и? Ĕнер клубра пире, ват тăмсайсене, сĕлеке юхтарттараканнисенчен пĕри вĕт ку? Балерина.

– Пĕркун эс Туляна авлантартăм терĕн. Паян хăвăн туйна тумалла мар-и? – йĕкĕлтет Сава Савви.

Куçук Куçки ăна çиллессĕн тĕртсе ярать:

– Эй, ухмах Савалаев. Тăрри шăтăк. Хĕрĕм пулать вăл мана çулĕпе. Ача.

– Хăй килĕшсен ача тесех тăмăн-ха... – парăнмасть Сава Савви.

Куçук Куçки хĕр çумне пырса тăрать, ăна пит тĕсесе сăнать. Муза та ăна хирĕç шăтарасла пăхать. Ыттисем аяккарах пăрăнаççĕ.

– Эп сире таçта курнă пекех. Ăçта курнă-ши? – тĕлĕннине пытараймасть Муза.

Куçук Куçки, кĕлеткине тÿрлетсе, пиншакне тÿмелет:

– Мана та эс темле курнă-палланă çын пек, çывăх çын пекех туйăнатăн. Мĕн ятлă-ха эс, хĕрĕм?

Хăна Кузюкова алă парать:

– Муза. Чăваш патшалăх ансамблĕн артистки.

– Кузюков. Константин Иванович, – хӗр аллине ҫемҫереххӗн тытса хайпе паллаштарать сад хуҫи. – Агроном. Уйра ҫӑкӑр, пахчара пан улми ӳстеретӗп. Ҫак сада хам ларттарса хамах пӑхса ӳстертӗм. Хамах сыхлатӑп. Манӑн чун уҫҫи. – Аллисене ҫӗклесе кӑтартать. – Манӑн пурнӑҫ. Пӗччен упалла пурӑнсан та хама пӗччен тесе шутламастӑп. Тутлӑх, илем ҫемйинче савӑнатӑп ҫакӑнта.

– Ҫапах та шалккӑ сире, пӗччене. Ачу-пӑчу ӑҫта-ха тата? – хӗрхенсе ыйтать Муза.

Ватти турткаланарах евитлет:

– Таҫта ҫӑва патӗнче...

Сава Савви ӑна кӑштах саваласа илет:

– Таврара миҫе ача пур, вӗсенчен виҫҫӗмӗшӗ манӑн теттӗнччӗ-ҫке мухтаннӑ чух.

– Ах, ҫакӑн чараксӑр чӗлхине!.. – чышкипе хӑмсарать ӑна Куҫук Куҫки. – Аҫу саваласа ҫитермен Савва. Ҫырт шӑлна!

Муза Куҫук Куҫки хутне кӗресшӗн:

– Кулма лайӑх-ха та, анчах пӗччен пурӑнма...

– Мӗн, хӗрӗм, эсӗ те пӗчченех пурӑнатӑн-им? – кӑсӑкланать Кузюков.

– Пӗчченех мар-ха: Муза, Луиза, Лиза эпир.

– Аҫу-аннӳ ӑҫта?

– Аттене курман эп. Пӗр кивелнӗ сӑн ӳкерчӗк пурччӗ килте. Темле сирӗн сӑнлӑрах арҫын. Анне... анне качча тухнӑ.

Теме сиснӗн, Куҫук Куҫки кӑртах сиксе илет:

– Сӑн ӳкерчӗк терӗн-и? Ҫынпа ҫын хушшинче пӗрешкелли тӗл пулать. Тӗнчере унашкалли лӑках. Мӗн, пӗрле илсе кайман-им сире аннӳ?

– Эп ача ҫуртӗнче ӳснӗ, ҫавӑнта ташлама вӗреннӗ.

– Лизипе Луизи тата кам патӗнче? – пӗлесех килет пулас Куҫук Куҫкин.

– Юрӗ, каярахпа калӑп, – тесе Муза каччасем чӗннӗ еннелле уттарать.

Сава Савви Кузюкова сумка йӑтма пулӑшать, кӗленчисем юрланине илтсе кулса ярать:

– Эс, Куҫкӑ пичче, каллех Америкӑна кайнӑ пать?

Ҫӑна илтнипе лешӗ хавхаланса каять:

– СШАна та ҫитрӗм. Кубӑна та кӗрсе тухрӑм. Китай урлӑ таврӑннӑ чух Айдак пичкине те ҫапса уҫрӑм.

Пурте кулса яраҫҫӗ. Муза ҫеҫ ӑнланмасӑр пӑхкаласа тӑрать.

– Пирӗн Куҫкӑ кукки вӑл шӳтлеме юратать, – Шупашкар хӑнине ӑнлантарма пуҫлать Лар Иванӗ.

– Куҫук Куҫки ӑна аллипе сулса чарать:

– Эп хамах маҫтӑр юмахлама. Пирӗн кунта, хӗрӗм, хамӑрӑн нуши-терчӗ. Хамӑрӑн камит-шӳчӗ. Ял вӑл, Чӗркуҫ та, Ҫӗрпелте, пурте хамӑршӑн ҫеҫ тӑван ял...

– Сумкине ӑҫта лартмалла?! – кӑшкӑрать алӑк патӗнчен Сава Савви. – Йӑтнӑшӑн кӑштах премиальнӑй тӳлесен те юрӗччӗ пире... Натурӑпа.

Куҫук Куҫки чышкипе юнать:

– Парап ак сана натура. Натуральнӑй чышкӑ-муклашкӑ. Чӑтӑм хуранне чӑм. Унта шыв чӑппипех, мехлемелӗх пур. Ну ку ял кулькисене-алкукуликсене, тан пӑр ҫине аннӑ вӗсен кайӑксем пек...

Лар Иванӗ куккӑшне сисмеллех тӳрлетет:

– Пире, ял интеллигенчӗсене, алкоголиксем тесех ан кӳрентерӗр ӗнтӗ. Чикӗрен иртместпӗр вӗт. Хӑвӑр пекех шӳтпе закусить тӑватпӑр.

Баянне сак ҫине лартнӑ Анат Тули те калаҫӑва хутшӑнать:

– Куçкă пиччен шӳтне тепĕр майлă ăнланса эпир унăн йывăр сумкине хамăрла-тăванла таварса пăхар-ха.

– Мур патне кайтăр-и? Атьăр, ĕçлĕр. Хам валли те, сирĕн валли те илсе килнĕ.

Çамрăксем сумкăран эрех, сăра кĕленчисем, консервă, кăлпасси, çăкăр кăларaççĕ, тĕпне юлнине хуçи валли хăвараççĕ. Кузюков ташăçăпа сăмахлать:

– Чарчĕç мана, каласа пĕтерме памарĕç канальăсем. Мĕн пиркиччĕ-ха?

– Эсир: «Ял вăл хамăршăн çеç тăван ял», – тесе пуçланăччĕ, - аса илтерет Муза.

– Ия, ия, хамăршăн çеç. Ыттисемшĕн вăл... – аллине ласт сулать Куçук Куçки. - Уйрăмах – хулашăн...Ял вăл – хула тарçи. Пĕлетĕн-и, хĕрĕм, ял – тарçă.

– Мĕншĕн? – тӳрех ăнланаймасть Муза. – Хулапа ял пĕр-пĕрне алă парса, пĕрне-пĕри аталанма пулăшса пынă пек туйăнать мана.

Куçук Куçки каллĕ-маллĕ уткаласа тăнлантарать:

– Эй, çук, хĕрĕм. Акă, хĕрес хурса калатăп: ял – хула тарçи. Мĕншĕн? Акă мĕншĕн. Эпир çак çĕр çинче мĕн ӳстернĕ – çавна хула çыннине сĕнсе çӳретпĕр, хула çынни валли патшалăхне васкаса кайса паратпăр. Йӳнĕ хакпа. Пуснă выльăхчĕрлĕх аш-какайне Шупашкарта ху аллупа сутаймастăн. Каллех йӳнĕ хакпа унти харам пырсем çавăрса илеççĕ те хаклăлатса сутса ним тар кăлармасăр пуяççĕ. Пусретниксем-усламçăсем... Пӳсĕр çисе ятăрах вĕсен шампа хырăмĕсене. Хула кĕрлет, аталанать, капăрланать. Шупашкарта пултăм та хĕлле... Ай-вай-вай...

– Мĕн тĕлĕнмелли куртăр вара унта? Маншăн пулсан... ахаль провинци хули. Питĕр, Киев, Рим пулсан...

– Хули мар-ха, хули пирĕн чаплах – тăван чĕре, – малалла кустарать калаçăвне Кузюков. – Хула çыннисем тĕлĕнтерсех ячĕç. Троллейбусра пăхса пыратăп çапла. Юриех шутларăм. Хĕрĕх сакăр хĕрарăмран çыхнă калпак тăхăнни иккĕн тата тепĕр чикан майри ăшă тутăр уртса янă. Ыттисен пуçĕнче пурин те – чи хаклă тиртен çĕленĕ çĕлĕк. Урисенче – мутă атти йăлкăшать. Пӳрнисем - ылтăнахах ункинче. Ялта пирĕн – калушпа резин атă, тутăрпа сурăх е мулкач тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк, фуфайкăпа килти кĕске кĕрĕк е тарпа хытнă куртка-пиншак...

Чӳречерен пуçне кăларнă Сава Савви чĕнет:

– Пурте пĕлекен юмаха яриччен килĕр часрах кунталла. Хула яла пăхăнтарни, хула çынни ял çыннинчен шукăльреххи тахçанах паллă. Эсир, Куçкă пичче, нумай пакăлтатсан, США-н пĕр штачĕсĕр тăрса юлма пултаратăр.

– Мутри сире, унта! – хыпăнса аллине çĕклет Куçук Куçки. – Çиччас, каласах пĕтерем-ха. Та-ак, итле малалла, хĕрĕм. Шупашкарта унта кашни кĕтесре эрех лавкки, эрех-сăра хупахĕ. «Çатма икерчи» ятлă кафене чăннипех çатма икерчи çиме тесе кĕтĕм те...тĕлĕнсех кайрăм. Апатланма пынă хĕрарăмсемпе ача-пăчаран вăтанмасăрах мушиксем стаканĕ-стаканĕпе шур эрех ярăнтараççĕ. Вăл черетре сĕнксе тăракан мĕскĕн хĕрарăмсем те пур. Черккепе мар халь, мăн стаканпах яраççĕ. Ай-вай-вай... вăт сана культура шайĕ: пысăкланса пырать-ши, ӳсет-ши?

Лар Иванĕ пӳртрен вĕсене илтмеллех калать:

– Чаксах пырать. Культурнă чакать пирĕн... хăпармасть.

Музăпа Куçук Куçки пӳрт еннелле утаççĕ. Куçук Куçки чарăнса йĕкĕтсене асăрхаттарать:

– Пулать сире, шаймăксене! Чактарăп ак. Культура министрĕ унтах-ха, асма памĕ, культурăлатĕ.

– Эп паҫӑрах сиртен ыйтасшӑнччӗ, – тет Муза. – Ялта, мӗн, эрех сутмаҫҫӗ-им?

– Сутаҫҫӗ. Хаклӑ-ҫке. Укҫи ҫук туянма. Паҫӑрах каларӑм-ҫке чухӑн вӑл хресчен тесе. Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхӗ параймасть. Патшалӑха налук аран-аран тӳленӗ хыҫҫӑн – касса пуш-пушӑ. Килте выльӑх-чӗрлӗх ӳстерсе сутнипе кӑна тытӑнкаласа пурӑнатпӑр. Ак ку пырӗ... ӑна-кӑна ӑнланмасть. Унӑн хайӗн политика – мухмӑр политики. Тӗрӗссипе кашни урамрах эрех точки пур. Аякран кӳрсе килнӗ техника спиртне шывпа хутӑштарса сутаҫҫӗ. Тем тӗрлӗ имҫам ярса тунӑ сӑмакунӗ те ак ҫак валакри шыв пекех тапса тӑрать. Милицирен те хӑрамаҫҫӗ. Ҫав наркӑмӑша ӗҫнине пула миҫе ҫын леш тӗнчене ӑсанчӗ! Спиртпа аншарли улталаса сутакансене ҫын вӗлерекенсене айапланӑ пек айапламалла та... анчах саккунӗ ҫук унашкалли. Ҫав саккуна тумаллах, унсӑрӑн хамӑра хамӑр ахӑра-ахӑрах, юрласа-ташласах пӗтерсе пыратпӑр. Ирӗксӗрех вара пирӗн ялтан СШАна та Кубӑна, Китая та, темле ҫӑва шӑтӑкне вӗҫме тивет.

Муза ӑнланмасть-ха, унран ыйтать:

– Ытла хакла ларать пуль хальхи пурнӑҫра ют ҫӗршыва ҫӳреме?

Куҫук Куҫки кулать:

– Ытла хаклах мар, лавккаринчен йӳнӗрех. Вӑрнара ҫеҫ ҫитмелле автобуспа. Юрать-ха ҫулӗ такӑр та. США та, Куба та, Китайӗ те, Етӗрне енчи Айдак председатель пичкийӗ те район хулинчех. Америка спирчӗ, Куба ромӗ, Китай эрехӗ... Тем те пур. Вӑрттӑн сутаҫҫӗ. Лавккаринчен ҫур хакпах.

Вӗсене кӗтсе илеймен каччӑсем пӳртрен кӗпӗрленсе тухаҫҫӗ. Сад хуҫине Лар Иванӗ алӑ парать:

– Тавтапуҫ, кукки. Кӑшт мухмӑр сӗрӗмӗ явӑнатчӗ те хам тавра, халь сирсе ятӑм.

– Каҫарӑр ӗнтӗ пире, Куҫкӑ пичче. Америкӑна та уҫрӑмӑр. Кубинкӑна та глубинкӑра кӑштах ятӑмӑр. Китай рис шывне те раснарах пуль тесе тутанса пӑхрӑмӑр.

Сава Савви кӑмӑлсӑр:

– Сӑри вара... «Чӑваш сӑри» ятлӑ пулсан та, ялти чуман кӗсре шӑкӗ пек ҫеҫ. Вӑхӑчӗ тухнӑскерне парса янӑ, шампански пек сирпӗнет. Ах, ку хула ҫыннисене... пиртен кулакансене...

– Кулаканӗ ӗнтӗ вӑл...– ӑна тӳрлетсе калать Куҫук Куҫки. – Пирнешкел ӗҫлекен мар. Тухтӑр та, учитель те, культурник те, станок умӗнче ӗҫлекен те кулмасть ял ҫыннинчен. Ӗҫлекенӗн ун яланах совеҫӗ пуҫ тулли, анчах кӗсйи шӑтӑк пулнӑ. Патшалӑх пурлӑхне куҫкӗрет тустаракансем, хак хӑпартса халӑха ҫаратакансем кула-кулах пӑхӑнтарасшӑн пире. Ҫӗр енне туртӑнтармалла хула ҫыннине. Куртӑр, пӗлтӗр вӑл ҫӑкӑр мӗнле ӳснине, ӑна кам ӳстернине, унӑн хуҫи мӗнле пурӑннине. Техника, удобрени, топливо, стройматериал хакне капашсӑр ӳстернипех тутӑ пулаймӗҫ. Укҫа кавлесех хырӑма тӑрантараймӗҫ...

Сава Савви ун ҫумне хушса хурать:

– Чухӑн яллӑ ҫӗршыв нихҫан та пуйӑманнине ӑнланасшӑн мар-ҫке ҫӳлти пуҫлӑхсем...

Пуҫне пӑркаласа тӑракан Куҫук Куҫкийӗ те кулянать:

– Ҫапли ҫапла пуль те, ачамсем, анчах пурнӑҫ урапи лачакана хытах лакса ларчӗ-ҫке. Мӗнле туртса кӑларӑпӑр ӑна?

– Кӑларатпӑр! – ик аллине те ҫӳлелле ҫӗклет Сава Савви.

– Ял пурпӗрех ҫӗнелет. Ял ҫынни те пурпӗрех хула ҫыннинчен кая юлмасть: ӑсӗпе те! ӗҫӗпе те! – хавхаланать Лар Иванӗ.

– Юрри-ташшипе те юлмасть! – баянне ҫакать Анат Тули.

Куçук Куçки вĕсене ыталаса илет:

– Çил-тăманăн та, çумăрăн та вăхăчĕ нумаях тăсăлакан марччĕ-ха. Тĕнчен ыр çанталăкĕ ытларах пулаканччĕ. Этемĕн те савăкĕ нумая пытăрччĕ. Çапла-и, ачамсем? Ну-ка, Туля, аçу-аннӳ юррине асă ил-ха. Микита та, Марье те артистлах шăрантараççĕ ăна.

– Чăваш гимнĕ тунине-и? – ыйтать баянист.

– Шăпах çавна, шăллăм. Аттесен юррийĕ вăл – çĕнĕ пурнăç тăвакан халăхăн кĕреке юрриччĕ. Чăваш чунне варăннă юрă. – Юрласа ярать:

Çурхи тĕнче вăраннă чух,
Хаваслă кун шăраннă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.

Пурте ун çумне хутшăнаççĕ:

Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Асран кайми юратнă çĕршыв!..

Анат Тули хавхалантарать:

– Тата çĕкленӳллĕрех! Хоппа! Юрă кĕрлет:

Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Никам çĕнми мухтавлă çĕршыв!..

Хул пуççи çине кĕрепле хунă хĕрсем килсе тухаççĕ. Шавлаççĕ. Çăлкуçран шыв ĕçме пикенеççĕ. Вĕсене чи малтан асăрханă Муза хавхаланса ӳкет:

– Ой, тинех мана та юлташсем тупăнчĕç, атту кунта, арçын купинче... Эсир ĕçрен-и?

Кĕрепле аври çине уртăнса тăракан Люба ун çине йĕрĕнчĕклĕнрех пăхса çиллессĕнрехxĕн хуравлать:

– Паллах, ĕçкĕрен мар. Эпир фермăра ĕне сума та, хĕрсемпе утă тавăрма та ĕлкĕрнĕ. Эсир кунта, мĕн, намăса пĕлмесĕрех, тăр кăнтăрлах концерт лартатăр-им?

Вĕсем умне пырса тăнă Анат Тули куçĕпе икĕ юратăвне те хĕртсе илет:

– Кашнийĕн – хăйĕн ĕçĕ. Куçкă пичче – хуралта.

Ăна Лар Иванĕ такăнтарать:

– Анат Тули улахра.

Сава Савви те ӳксе юлмасть:

– Лар Иванĕ тыр аллать.

– Сава Савви савалать, – юрă çеммине куçать Анат Тули. – Урай хăми якатать. Савалать, савалать, кĕсьене те якатать. Савалаев авланать.

Куçук Куçкин те кăмăлĕ çурăлакан чечек пек уçăлать:

– Атьăр пурте пĕрле юрлар-ташлар. Кăнтăр апачĕ халь, васкамалли çук. Никамран та хăрар мар. Хуçа çук. Александр Ильича Вăрнарта куртăм.

Анат Тули, аптранипе, хĕрелнĕ пит-куçне шăлса, ăнлантарма хăтланать:

– Ăнлан, Муза, ку чиперккесем ман, э-э, хисеплĕ Терпсихора, шăпах «Çăлкуç» ансамблĕн артисткисем. – Баянне тăсса ярать. – Эх! Хоппа!

Хĕрсем йĕркеленсе карталанаççĕ те чăваш ташши ташлама пуçлаççĕ. Вĕсем çумне Музăпа каччӑсем хутшăнаççĕ. Куçук Куçки те чăтаймасть, «Малалла!» тесе кутне çатлаттарать те ушкăн варрине авкаланса кĕрет. Ташă вĕçленсе пынă май кĕвĕ улшăнать. Анат Тулин сасси илтĕнет:

– Пуҫларăмăр! Ак ҫапла. Хоппа!

Люба, васкамасăр, ҫĕкленӳллĕн юрласа ярать:

Шывран таса пулаймăн
Тесе каланă ваттисем.
Манра усал кураймăн...

Пуҫне чикнĕ хĕре баянист сулахай аллипе ачашласа илет:

– Ма малалла юрламастăн ҫак эс, Люба? Тавай, ҫĕнĕрен пуҫлатпăр!

Люба ӳсĕрет, пырне хыпашланҫи тăвать, чĕрине ярса илет:

– Каҫарăр, урăх юрлаяс ҫук. Эпĕ...

Музăшăн ку темле ытарлăн туйăнать пулас, вăл, хăйĕн тахҫанхи каччине вăрттăн куҫ хĕлхемĕпе ҫунтарса илет те Любăна хупласа хурать:

– Музыки экстра-класс. Пит вăйлă юрă пулас. Кама халаллатăн, Анатолий? Сăввине тупса памăн-ши?

Анат Тули ăна ҫырса пама шантарать:

– Каларăм-ҫке сана, Муза, ҫĕнĕ юрăсем ҫыртăм тесе. Ҫакă ĕнтĕ вĕсенчен пĕри. Концерт программине кĕртнĕскер.

Вĕсене тăнлакан Люба кĕреплине хулпуҫҫи ҫине шап хурать:

– Каҫарăр мана, эп хĕрсемпе утам-ха. Эп...

– Люба?! – аяккалла чупса каякан хĕре чарасшăн хăлаҫланать Анат Тули. – Тăхта! Калам...

Люба ҫаврăнса алă сулать:

– Сирĕн хăвăрăннах компани те, кампани те веселăй.

– Каяр эпир те, Сава Савалай, – пушшине шартлаттарать Лар Иванĕ. – Ĕҫлемелле.

Пӳртрен эрех кĕленчи йăтса тухакан хуралҫă вĕсем патне ҫывхарать, сылтăм аллине аялалла сулать:

– Тăхтăр-ха, мана та лартса кайăр-ха.

– Ăҫта ҫити? – хулран ҫавăтать ăна Лар Иванĕ.

Куҫук Куҫки аллипе тĕллесе кăтартать:

– Ҫĕвĕҫсем патне. Фабрикăна ҫитиччен. Пĕр «кубинкине» кубанка ҫĕлекенпе паллаштарас. Мана вăл хура ҫĕлĕк парнелесшĕн-ха. Пĕлетĕр вĕт хĕлле эп кубанкăпа ҫӳренине. Эс, шăллăм, Туля, хуралла: садне те, ташăҫне те. Мутри, пур пирĕн кунта аҫтаха-каҫтакасем. – Кутне ҫат тутарать. – Малалла!

Кĕҫех виҫҫĕшĕ те кайса ҫухалаҫҫĕ. Лаша тулхăрни, Иван Ларин: «Но, юрттартăмăр!» – тени илтĕнет. Кайăксен юрри, шапа кĕвви, Анат Тули ашшĕн тимĕрҫĕ лаҫҫинчен вĕҫсе килекен мăлатук сасси пĕр ҫемме хутшăнать. Муза тавралла вăрт-варт пăхса ҫаврăнать те, никам ҫуккипе усă курса качча ыталать:

– Иксĕмĕрех тăрса юлтăмăр, чунăм. Атя Америкăна кайса килер.

Вăрттăн шухăшпа хĕмленнĕ Анат Тули баянне вĕҫертет:

– Апла тăк Кубăна та кĕрсе тухар. Китая та ҫитер. Ҫула май Ачакра та пулса курар. Ха-ха! – Баянне йăтать те хăрах аллипе Музăна ҫавăтать. – Атя...

Вĕсем пӳрте кĕреҫҫĕ, чӳречине хупаҫҫĕ, караҫҫĕ. Ҫав хушăра сад умне Лилипе Вероника ҫитсе тухаҫҫĕ.

– Куртăн-и, пĕрле кĕчĕҫ? – ик чышкине те шаккаса илет Лили.

Вероника тарăхса урине йытта хăратакан сурăх пек тăрст! тапать:

– Намăссăрсем! Кăнтăр кунĕнчех...

– Тулян Шупашкарта уйрăлми майри пур тенине эп шкулта вĕреннĕ чухнех илтнĕччĕ, – йĕкĕрешне ҫĕнĕ хыпар пĕлтерет Лили.

– Ман хӑлхана та ҫитнӗ, - тарӑннӑн сывласа калать Вероника. – Ҫеҫтепе балеринӑпа пӗрлешнӗ текен сас-хура та тухнӑччӗ ялта. Любӑна кулянтарас мар тесе пӗлтермен. Сана та пӑлхантарас шухӑш пулман. Саншӑн та ҫӗнӗлӗх мар иккен. Итле, ҫӗркаҫ клубра ҫурма ҫара кутла ташлаканни ҫавах. Йытӑ ами. Кӗрт.

– Пирӗн Люба ухмаххи ҫаплах калаҫать тата унпа, Туляпа. Хам пулсан... Ман савнӑ Савва ҫапла хӑтлансан-и? Эп иккӗшне те ак ҫапла...

– Шутсӑр юратап тет-ха та ӑна...

– Тули хӑй Любӑна юратмасан, улталасан... Тем те кӗтме пулать вӗсенчен, баянист-купӑссӑсенчен. Ӑҫтан лӑпкӑ ҫил вӗрессе ҫеҫ кӗтсе ларассӗ. Ах, ку танцовщицӑна. Уҫ кут. Есенин та хӑйӗн Дунканӗшӗн пуҫне ҫухатнӑ. Ку Микита Тули те... Ну, ку Эйседурӑсене... Турӑ хуҫлатса лартӑрах...

Вероника йӗкӗрешне аларан тытса чуптарать:

– Часрах каяр-ха Люба патне. Хӑвӑртрах эс!

3

Ҫӑлкуҫ ҫумӗнчи пӳрт умӗнчех. Ҫӑмӑл автомашина кӗрлени илтӗнет, шӑп пулать те, кӗске хуллӑ кӗпе, джинс шӑлавар, модӑллӑ пушмак, шурӑ берет-карттус тӑхӑннӑ Ачча Васҫи шӑхӑркаласа килет. Аллинче канфет курупки. Тавралла пӑхса ҫаврӑннӑ май вӑл пӗлӗте лектерес пек чалт-чалт сиксе аллисемпе хӑлаҫланать, хушӑран чышкисене чӑмӑртать:

– Пирӗн уй, пирӗн шыв, пирӗн кил, пирӗн лавкка, пирӗн шыв арманӗ, пирӗн... Йӑлтах пирӗн пулнӑ вӗт вӑл ҫак тавралӑх. Пирӗн!!! Веҫех пирӗн алӑра пулнӑ. Ах, хӑватлӑ, вайлӑ йӑх пулнӑ пирӗн. Хамӑр ял ҫынни кӑна мар, кӳршӗ ял ҫынни те пуҫҫапнӑ, куҫран пӑхнӑ Чӗркуҫӗнчи Ачча Танччине. Ҫав кашкӑрсем пулман пулсанах... Ых, ҫав кашкӑр йӑхне! Ҫав выҫ кашкӑрсем аркатнӑ пирӗн йӑх тӗрекне, пирӗн мул кӗлетне. Ых! Хӑйсенчен... шӑмӑ татакки кӑшласа ларакан выҫ кашкӑрсенчен... – Канфет курупкине пуҫ тӑрринче ҫавӑрттарать. – Пурте тӗнче юххипе юхать, пурте ҫӗнелет, тӗнчийӗ те, пурнӑҫӗ те ак ҫак йыт пырши майлах явӑнса, аталанса пырать. Пӑшик пулчӗ вӗсен, антихристсен. Вӗсен ҫаврӑмӗ хӑрчӗ, татӑлчӗ. Пирӗн чӗрӗлчӗ. Эпирех ҫӗнтертӗмӗр. Эпирех пуйрӑмӑр. Эпирех пӑхӑнтартӑмӑр. Пурне те. Ҫак яла та. Раҫҫей патши тулӑхлӑ саккун – ҫӗр саккунӗ кӑларасса ҫеҫ кӗтетпӗр. Ун чухне Чӗркуҫ ҫӗрӗ каллех пирӗн алла куҫать. Йӑлтах туянатӑп. Ял халӑхӗпе пӗрлех. Ачин помещик. Улпут! О, епле вӑйлӑ янӑрать! – пӳрт еннелле ҫаврӑнать. – Хэ, музыка вӗт унта. Мӑйлатать, авӑ: «Чунтан савӑнар, тӑвансем, пӗрле пулнӑ чух савӑнар...» Тӑван, тӑван... Эх, халь тин мӗн тӑван... Ҫуккӑ ман ку ялта пӗр тӑван та, нимле тӑван та. Пӗтнӗ ман тӑван... Ҫӗпӗрте, Колымара. Чӗркуҫ ячӗ те маншӑн Вилкуҫ халь. Музӑна тупатӑп та, Шупашкара лартса каятӑп та... Маншӑн Кивӗ Чӗркуҫ – Ҫӗнӗ Чӗркуҫ пулса тӑрать: Чӗркуҫ – Шупашкарӑм. Каларӗ-ҫке Вӑрнарта артистсем Муза ялах юлчӗ тесе. Ялти пӗр хӗрарӑм та каларӗ-ҫке ӗнерхи ташлакан ҫара кут намӑссӑр хӗр садалла якӑлтатса кайрӗ тесе. Ҫакӑнтах пуль-ха.

Ачча Васҫи алӑка хыттӑн тӳнлеттернипе шалта кӗмсӗртетнӗ сасӑ илтӗнет. Уҫӑлнӑ чӳречерен Анат Тулин пуҫӗ курӑнать:

– А-а-а, «пуҫана»?.. Килӗрех... Иртӗрех тӗпелелле, тархасшӑн. Алӑкне те ҫиччас уҫатпӑр.

Ачча Васҫи арӑслан пек хӑрлатать:

– Ман Муза ӑҫта?!

Анат Тули юрласа ярать:

– Муза, Муза, виҫӗ муза, маншӑн виҫ хавхалану, маншӑн эсӗ виҫ ҫӑлкуҫ: Шухӑ шухӑш, Асӑну, юрра хывнӑ Юрату.

Пушшех хаярланса кайнӑ Ачча Ваҫҫи хӑйӗн кӗвӗҫӳллӗ тӑшманне туртса ҫурма хатӗр:

– Ан мӑшкӑллӑр манран! Ҫитет! Ҫак шӑрҫлӑ пӳртре хупӑнса ларса, хоппа туса хоплаттаратӑр та, ҫийӗнчен кулатӑр-и-ха?

Ӑна хирӗҫ Муза кӗске кӗпине аллипе шӑлса-якатса тухать.

– Оп-па! Хоп-па! – Ачча Ваҫҫин курупкине ярса илет Муза. – Эпир, мӗн... музыка итлеме кӗнӗччӗ те... Ой, ман чи юратнӑ канфет: «Чӑх сӗчӗ». Ой, пит маттур-ҫке эс, Василек. – Ӑна тутинчен чӑп тутарать. – Чӑх суса канфет тума та маҫтӑр иккен эсӗ, Василек. Ялта кунта чӑхсем сӗт памаҫҫӗ, ҫӑмарта ҫеҫ тӑваҫҫӗ. – Иккӗшӗн хушшинче ҫаврӑнса вӗсене пусма картлашки ҫинчен ҫӗрелле туртса антарать. – Тавтапуҫ парнешӗн. Эсӗ мана илме килмен пуль те, Василек?

Ачча Ваҫҫи хӗре аллинчен хыттӑн ҫулса илет:

– Паллах, сана илме, тайкаланакан пушмак пӑру туянма мар... камшӑн пултӑр тата... Эп саншӑн машина хӑвалатӑп, бензин ҫунтаратӑп, парне туянатӑп, пӗтӗм суту-илӳ ӗҫне пӑрахса хӑваратӑп. Вӑл пур...

– Пур-ҫке вӑл – юратнӑ савнийӳ, – лӑх-лӑх кулать Анат Тули. – Пур, юнашарах. Хӑвӑр аллунтах-ҫке?

Музи йӑкӑлтатса тӑрать:

– Мӗн, эпир... Хуралҫӑн алӑкки айӑплӑ... хӑй тӗллӗнех питӗрӗнсе лараканни. Автомат-алӑк.

– Шӑна та вӗҫсе кӗрет терӗмӗр-ҫке, – ӑшри куллипе пит-куҫне камитлентерет Анат Тули. – Авӑ мӗн чухлӗн явӑнаҫҫӗ. Алӑка та пырса ҫапӑнаҫҫӗ навус шӑнисем. Хыт ҫыртаҫҫӗ, мурсем, ҫара ӳтрен...

Ачча Ваҫҫи шӑртне ниҫта хурайманнипе сӑмса умӗнчи кирпӗч катӑккине вӑйран тапса сирпӗтет те пушмак пуҫне хӑйпӑтса пӑрахать:

– Ай!.. Си-ире пула пулчӗ ку. Автоматически алӑк... Шӑна... Виҫӗ муза... Ҫара ӳт...

Анат Тули пӳртрен баянне йӑтса тухать те нӑртлаттарма пуҫлать:

– Итлӗр, Василий Данилович, юрӑ. Сӑмаххисене тӑнласан, тен, алӑк мӗншӗн питӗрӗнсе ларнине те, алӑк мӗншӗн уҫӑлнине те аса илтерӗҫ. Акӑ ҫапла. Хоппа! Пуҫлар:

Чӑваш ҫӗрӗн кӑра хӗрӗ
Ҫунат сарчӗ ташӑра.

Муза юрласа ташлать:

Йӑваш каччӑ ылтӑн ҫӗрӗ
Парнелесшӗнччӗ мана.

Хӗр аякалла ҫаврӑнса кайнине пула Анат Тули пӗччен юрлать:

Анчах ташӑҫ акӑш пулчӗ,
Вӗрӗ кайрӗ тӳпене.
Савӑнмашкӑн кӗрсе ӳкрӗ
Алтӑр Ҫӑлтӑр ытамне.

Каччӑсем патне вӗлтӗртетсе ҫитнӗ Муза вӗсене астарса ҫулӑмлантарать:

– Эсир... эсир паврӑр-тавлашӑр. Эсир...ҫураҫӑр. Ман сирӗн ҫине пӑхнипе вутлӑн ташлас килет. Ман каллех «чӑх сӗчӗпе» пылакланас килет. Э-эх! Ҳамӑрӑн ансамбльти Валентин Сизов юратаканнине кала-ха, Анатолий? Леш, вӑйӑри ташшине. Тутӑр тыт, текеннине. Кӑмӑллап-ҫке ҫав кӗвӗпе ҫаврӑнма. Эх-э-хэх, и-хи-хик...

– Çиччас, çиччас, - тет Анат Тули юрă кĕввине тăрук улăштарса. – Майри çўхе тутăрна салт. Ташла. Хăшĕ ярса илĕ ăна?

Ачча Васçи хĕр патнелле туртăнать:

– Муза?!

Çăлкуç патнелле çаврăнса çитнĕ Муза, чарăнса пуçне пĕкет те, илĕртўллĕн шепĕлтетет:

– Савăнмашкăн Алтăр çăлтăр ытамнех кĕрсе ўкрĕм пулсан апла эпĕ... сире иксĕре те çак пысăк алтăртан имлĕ шыв ĕçтерсе ўсĕртсе ярам-ха. – Чечеклĕ алтăрпа шыв йăтса пырать, малтан Ачча Васçине тыттарать. - Ĕçсе парăр чĕрĕтпе.

– Ы-ых! – çўçенсе илет Ачча Васçи. – Шăнтсах ячĕ ку шыв ăшчиккe. Пăр пекех.

Анат Тули алтăра тытса мухтанать:

– Манне вĕрилентерсе ячĕ, чун-чĕрене сиплерĕ, шухăша çивĕчлетрĕ. Пĕлетĕр-и, ĕлĕк иккĕн утпа сунара кайнă тет. Инçе çулта вĕсем виçĕ йыттипех пĕрле шăнса вилнĕ тет. Вĕсенчен вара Алтăр Çăлтăр пулса тăнă тет. Çавăнпа шăнтса ячĕ вăл сире, Алтăр Çăлтăр шывĕ. Хăвартан та, авă, сивĕ çапать. Тўпери Алтăр Çăлтăрăн сивĕ çути пекех çутатать куçу та. Сивĕ ытама туртса илтĕр эсир манăн Музăна – сивĕ Алтăр Çăлтăр ытамне.

Муза алтăра илсе вĕлтĕрт çаврăнать те майĕнчи çўхе тутăрне карт туртса салтса каллех ташша тухать:

– Кала баянна, Анатолий. Паян ман темшĕн çак ташшах чунтан ташлас килет. Э-эх!

Анат Тули баянне анлăн туртса ярать:

– Калам-ха апла. Эсĕ те мана, Муза, хамăрăн ансамбле, хамăрăн баян оркестрне куç умне кăларса тăратрăн, çĕнĕлле аса илтертĕн. Юрĕ, ташла. Ман Василий Даниловичпа калаçмалла. Итлетĕп сире, хаспатин.

Ачча Васçи баяниста çурăмĕнчен ўпĕнмеллех тĕртет:

– Çук, тĕрĕс мар ку, Анатолий Микитович. Ăна эсир, Музăна, хăвăрах аларан кăларса тартнă. Йăва çавăричченех. Пĕлме кирлĕ, унашкал хĕрарăм çанталăк улшăнса тăнă пекех улăштарма юратать кăмăлне те, çав вăхăтрах – юратăвне те. Пĕрмай савăклăх, пуянлăх шырать. Сирте малашлăх курман вăл. Сăпаçсипă калăр турруна иксĕр пĕрле пулайманшăн.

– Мĕнле малашлăх кирлĕ пулнă-ши ăна?

– Çавна та ăнланмастăр-ши? Тĕнчене çутатакан çăлтăр, чуна кантаракан çăлтăр, хырăма саракан, çи-пуçа чалкăштаракан пуянлăх çăлтăрĕ кирлĕ пулнă ăна. Çавăн хыççăн хăваласа кĕрсе ўкнĕ те вăл ун чухне çичĕ çăлтăрлă Алтăра.

– Сирĕн ытама. Çапла-и?

– Паллах. Эсир ĕнентернĕ пек сивĕ ытама мар. Ăшă алтăрах – пуян алтăрах кĕрсе ўкрĕ. Ун валли манăн çичĕ çăлтăрăн çичĕ çути, çичĕ кулли, çичĕ укçи, çичĕ уççи, çичĕ вăййи, çичĕ чуппи пурччĕ. Сирĕн... мĕн пурччĕ?

Кăмăлĕ улшăннипе Анат Тули баянне нарт! тутарать:

– Манăн-и? Манăн музыка пулнă. Пур та. Манăн юрă пулнă. Пур та, – тесе вăл шыври кăвакал сассисене пĕрле хутăштарса юрлать:

Сарă кайăк пулăттăм,
Ялан вĕссе килĕттĕм,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхемпе
Тăвансемпе пуплĕттĕм.

Эх, тăван, тус-тăван,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар та
Хамăр йышпа савăнар.

Манăн музыка, манăн юрă халăхра юлать. Нихçан та пĕтместь. Сирĕн мул вара... пĕтет, пуян алтăр-çăлтăру – çич çăлтăру... сÿнет.

Музăшăн пурлĕрех пулас, вăл ташă çаврăмĕн хумĕпе вĕсене ачашласшăн:

– Ой, епле лайăх кунта, ялта, садра. Пурнăç çĕтмахĕ. Чуна такам ытамласа илнĕ пекех туятăп. Эпĕ репетицисенче те, выступленисенче те чăм шыва ÿкиччен ташласа ывăнатăп, ал шăлли типме пĕлмест. Кунта, çак çалкуç çумĕнче, чĕре те урăхларах тапать, ура та çунатлăн вĕçет, чун та çав текерлĕк пек туртăмлăн юрлать. Итлес килет-и сирĕн, çăвăр автансен, эп юрланине?

Лешсем мăк-мак тукаласа илнĕ хушăра Муза юрласа ярать:

Пĕр пÿрне çинче – пас пÿрне çинче
Эп тытатăп çак çут тĕнчене.
Çав тĕнче çути халăх куçĕнче
Ялкăшса çунать хĕмлĕх вутĕнче.

Асамла вылять сирĕн куçсенче
Манăн илĕртÿ – манăн вĕлкĕшÿ.
Уçăмлăх ташши шавлă каçсенче
Сăнара куçсан – маншăн çĕнтерÿ.

Çав илем тĕнчи – ман пурнăç тĕнчи
Ашăмра пурнать, чĕрере тапать
Савăнăç тĕнчи – халăхăм тĕнчи
Чăваша çĕклет, чăвашла ташлать.

Хусахсем пĕр-пĕрин енне вутлă сăнă вĕçтерсе тăраççĕ, хĕр кăмăлне иккĕшĕ те икĕ тĕрлĕ çĕклеме хăтланса алă çупаççĕ. Çĕнĕ кĕвĕ çеммипе çаврăнма пуçланă юрăç-ташăç вĕсене асăрхаттарать:

– Ăнланмалла-и халь? Эсир чипертерех унта! Джентльменла тытăр хăвăра.

Анат Тули хĕр кăмăлне парăнать:

– Чиперлĕх – чи пире кирли. Персе пар-ха ăна пире? Муза, хăвăн савăклăх хумĕпе персе пар. Çапах та эпир, тĕл пулнă пек чухне, чиперленсех калаçасшăн-ха.

– Арçын калаçăвĕ пирĕн, чунăмçăм, ан хăра, – хĕр еннелле вĕçет Ачинăн чĕтревлĕрех сасси.

Арçын калаçăвĕ пĕр хушă таталать. Санар улăхĕ енчен çаплах текерлĕкĕн макăрнă сасси илтĕнет. Анат Тули малтанхи шухăшах малалла аталантарасшăн:

– Манра Муза малашлăх курайман тетĕр-ха апла, Василий Данилович. Кам пĕлет, тен, курман та пуль. Çынсем пек «çăлтăр» пулман-ха та эпĕ. Чăнах та тĕлленмен эпĕ вăл вăхăтра хăçан та пулин «çăлтăр» пуласса. Пирĕн, искусство тертленĕвĕн чĕпписен, «çăлтăр» тени вăл хăвна ху капашсăр хăпартлантарнă лăплантару пекки ĕнтĕ. Сцена çине тухнă кашни сăмса шывĕ, уç кут халĕ хайне талант, гени тет-çке. Кашниех ыттине тиркет, унран мăшкăлласа кулать. Искусство çăлтăрĕсем вĕсем пурри пур-ха. Вĕсем çапах та тÿпери çăлтăрсем чухлĕ çуках. Пирĕн те, авă, Чăвашра, юрлакан тĕнче çăлтăрĕ çук...

– Çуках пуль тесе шутлатăр-и вара? – тĕлĕнсе пуçне суллать Ачча Ваççи. –

Ун пекех ан шутлăр ĕнтĕ, Анатолий Микитович. Вĕреннĕ çынсем эпир, иксĕмĕр те интеллигент. Суту-илӳ институтĕ хыççăн университетра экономика факультетне пĕтертĕм, халĕ хам тĕллĕн вĕренсе юрист пуласшăн. Ăнланатпăр кăштах. Кашни халăхăнах пур вăл хăйĕн çăлтăрĕ. Халăх мĕн чухлĕ пысăкрах-йышлăрах – унăн çăлтăрĕ те нумайрах, мĕн чухлĕ пĕчĕкрех – çавăн чухлĕ сахалтарах. Чăваш халăхĕ те вăл тӳпери Пĕчĕк Алтăр Çăлтăр пек йăлкăшать. Пурах апла Чăвашăн та çăлтăрĕсем.

Анат Тули чееленсе пырать:

– Эпĕ сире, хальхи капиталистсене, искусствăна ăнланатăр-ши, укçа енчĕкне çеç пуçа чиксе мăйкăçланса ларман-ши тесе юри калярăм ку сăмаха. Паллах, пур пирĕн те юрăç-çăлтăрсем: Виталий Иванов, Виталий Петров, Вячеслав Гордеев, Иван Христофоров, Мария Еланова... Чăваш халăхĕн мухтавĕ! Хĕрарăмсем пирки урăх асăнмăпăр. Вĕсен уçамлă та чуна пырса тивекен сасси ахаль те чĕрене ыраттарать те... – Чăтаймасть, Муза еннелле çаврăнса юрлать: – Эх, Муза, Муза, виçĕ муза, маншăн виç хавхалану, маншăн эсĕ виç çăлкуç: Шухă шухăш, Асăну, юрра хывнă Юрату...

Музи те уçă кутне тата асамлăрах уçăлтарса вĕсен умне çаврăнса тăрать:
– Иксĕре те шутсăр юратассăм килет. Иксĕре те... Сирень сулхăнне чĕнетĕп. Вилетĕп Юрий Григорьев кĕввин асамлă ачашлăхĕнче йăпанса...– Анат Тули çав кĕвве янраттарнипе пушшех асса каять. – Ах, епле тыткăнлать!.. Кĕлеткеме çĕклентерсе таçта, таçта, хĕмлĕх çĕршывнех иштерсе каять. Тархасшăн ан чарăнха баянна калама, Анатолий.

– Авалхи Терпсихора чĕрĕлсе чĕрĕ кĕвĕ ыйтнă пекех те, мĕн тăвăн-ха санпа, Муза, итлесех пулать ман...

Анат Тули ансамбль оркестрĕнчи пек ăшалать, Муза сывлăшра вĕçнĕ пек çунатланать. Ачин алă çупать. Микитов акă юрлама чарăнать, тавлашăва çĕнĕрен чĕртсе ярать:

– Çапах та эсир, Василий Данилович, Муза ман чухăнлăхран хăраса çичĕ çăлтăрлă ăшă Алтăра кĕрсе ӳкрĕ терĕр пулин те, хăвăра Алтăр аврин тĕп çăлтăрĕ Мицар вырăнне хуратăр пулин те, ман шутпа эсир Музăна пурпĕрех çичĕ çăлтăрăн çичĕ çутине те, çичĕ тутине те, çичĕ куллине те, çичĕ укçине те, çичĕ уççине те, çичĕ вăййине те, çичĕ чуппине те парнелеймен. Эсир ăна çичĕ çăлтăрăн çичĕ йӳççине çеç панă пулас.

– Эпĕ! Эпĕ-и? – хĕремесленсе тăпăртатса тăрать Ачин. – Эпĕ ăна ним те паман-и? Эпĕ ăна сирĕн патран, ансамбльтен, çавăтса тухса кайсан ылтăн кăшăлпа кăшăлларăм, хаклă чул айне турăм. Шупашкарта ун пек тумланаканни те халь...

Анат Тули çунакан вутта тата вĕрсе хĕмлентерет тейĕн:

– Çапах паян, симĕс шăнаран тарса-пытанса, Муза манпах кĕчĕ çак пĕчĕк пӳрте.

– Ха! Мана симĕс шăна вырăнне хуратăр-и эсир? Çапкаланчăк. Тĕнче касса çӳрекен выç кашкăр. Урам юрăçи. Пĕлесчĕ сирĕн эп камне?.. Эпĕ...

Каламаллине тупсах пырать Микитов:

– Пĕлмесĕр. Хамăрьялсене те пĕлмесĕр ара. Ачча Танччин пĕртен-пĕр ывăлĕн пĕртен-пĕр мăнукĕ Василий Данилович Ачин хаспатин. Танччи Танилĕсем, Танчинсен ашшĕсем ĕмĕрĕпех услам туса вăрă-хурахла пураннă. Ачча пасарĕ вĕсен аллинче пулнă. Урмаел, Патăрьел тутарĕ, Хусан-Чулхула, Чĕмпĕр такамĕ вĕсемпе сыхăннă, мĕн чухлĕ лаша вăрласа сутнă, мĕн чухлĕ кĕлет çаратнă, мĕн чухлĕ куççуль юхтарнă таврари хура халăханне. Аслаçуна кулак тесе мар, вăрă-хурах

тутарсемпе çыхланса кайнăшăн хупса лартнă. Юрать тĕппине те хăвармарĕç ялта çав Танччи йăхĕсене, сăпаççипă патшалăхне тесе асанне Тур кĕтессине тăрса сăхсăхнине халĕ те астăватăп.

Ачча Ваççи хура çĕлен пек чашкăрать:

– Эх-хэ-хэ. Ылханчăксем. Танччи йăхĕ пĕтмен-ха. Хам пур чухне... Ачинсем пурăнаççĕ. Пуяççĕ. Тĕнче çаврăмне тухаççĕ. Хăюллăнах! Выç кашкăр йăхĕн çăпатисен, сирĕн, мĕн пур?

– Авă, итле, – пуçне тăвалла сĕлтсе кăтартать Анат Тули. – Аттен тимĕрç лаççи пур. Аннен анлă уй пур. Вĕсен унта телей пур.

Ăна хуллен тĕртсе ярсах шăлне йĕрет Ачча Ваççи:

– Пур, пур. Пăху пур сирĕн. Тимĕрçĕ лаççинче сĕрĕмпе чыхăнакан аçупа уйра пилĕк авакан аннÿсĕр пуçне кам пур, мĕн пур сирĕн? Ухмахсем. Тарçăсем... Песплат тар тăкакансем. Мĕн парать вĕсене пĕрлешÿллĕ хуçалăх тени? Ман хăть сĕтел-пукан фабрики, фазенда, суту-илÿ çурчĕ «Муза», стройфирма, автосервис станцийĕ, бензозаправкăсем, «Ачча» инвестици фирми, казиносем, Германире – кермен, Хура тинĕс хĕрринче – кану çурчĕ пур. – Кăкăрне çапса мухтанать. – Во, эп кам?! Манпа пĕтĕм чаплă çын, пуян çын пуç пĕксе калаçать. Эп такама та пуççаптарма, пăхăнтарма пултаратăп – Чăваш пуçлăхĕсем таранах. Пĕр йăлмакара... Во эп мĕнле шайра усрама пултаратăп Музăна – çичĕ çăлтăрăн çичĕ çутипе, çичĕ çăлтăрăн çичĕ уççипе, çичĕ çăлтăрăн çичĕ куллипе, çичĕ çăлтăрăн çичĕ ваййипе, çичĕ çăлтăрăн çичĕ чуппипе. Çиччĕпе те мар – çич çĕр çитмĕл çичĕ телейпе те. Эсир мĕнпе савăнтарма пултаратăр-ши ăна, шăркалчă?

Хăйĕн тивĕçне шанать-ха Анат Тули:

– Эпĕ ăна хĕмлентернĕ. Эпĕ ăна савăнтарнă. Çав хĕрÿпе ташлать вăл. Епле вĕçет!

– Шупашкара çитсен ла-айăх ташлаттаратăп-ха эпĕ те ăна. Ай-яй кăтартап малтанхи савнисемпе мĕнле асмаллине.

– Асни мар вăл, малтанхи юратăва пĕтĕм хевтепе чунтан аса илни çеç. Çапах та эпĕ...

Ачча Ваççи ахăлтатса кулнипе Муза та шартах сикет:

– Муза маншăн чи малтанхи, никам чуп туманни пулчĕ тесшĕн-и? Балерина... Эсир ...малтанхи? Ухмах вырăнне хурасшăн мана. Ара, вĕсем вĕреннĕ чухнех... Вĕрентекенĕ те унăн ар пулнă-çке?

Ку таранччен хăйне джентльменла тытса тăма тăрăшнă Микитов чăтаймасть, Ачина кăкăр айĕнчен паклаттарсах тĕртсе ярать:

– Тăмсай! Ача пулнă ун чухне вăл – хореографире вĕреннĕ чухне. Хĕр вăхăтне çитсен тин мана юратнă. Пĕлетĕн-и, урăх никама та мар – мана çеç юратнă. Мана çеç... Çавăнпа вăл мана халĕ те çав историлле самантри пек туйăмпа юратать. Çавăнпа вăл мана юратма пăрахмасть, мана ырать, мана тупать, манпа ав малтанхи ырлăха малалла тăсасшăн вăрттăнланать, санран та хăрамасть, сана... Эпĕ те ăна юрататăп. Ой, манаймастăп...

Муза çăлкуç умĕнчи сак çине ларнă та тĕнче юратăвĕн юххине, кăтра хулăн пĕлĕтсем пĕр-пĕрин патнелле çапăçуллăн çывхарнине, чарăнмасăр юхакан валак шывне сăнать, куç айĕн хирĕçÿллĕ каччӑсене ытарлăн пăхать. Унăн пĕр тĕллев – хăйне пурнăç сăпкинче амăшĕ пекех юрла-юрла сиктерме пултараканнине тупасси. Вăл ăна шанать, хĕрарăм-арçын сĕткенĕпе ырă курнă уçă хĕрсем халĕ ача туса çемье чăмăртама шутсăр маçтăрланса çитнĕ. Вĕсен хăйсен кĕпе айĕнчи искусстви пур. Вăл искусство та кирлĕ пек туйăнать Музăна илем искус-

ствине чунпа варăнмашкăн. Улшăнса тăракан хĕмлĕх, астару-канлĕх ăна та космос вăйĕ парать, тaçти темле çыхăну вăйĕ этемлĕхе малалла тăсмалли арлăх хăватĕнче ар вăрлăхĕ шырать. Вăйлă артаң. Пурăнмашкăн вара ăна ачаш пăру кирлĕ: хăйне итлекен, хăйне пăхăнакан, хăйшĕн тĕнчене тепĕр майлă çаварса хума пултаракан астармăш. Хĕрарăма çут çанталăк мĕнле ырлăх курма-тӳсме панипе вăл çамрăклăхра йĕм тĕпĕнче хĕмлĕх сӳниччен усă курса юласшăн-ха. Çавăнпа вăл икĕ каччă хушшинче хĕç пек çуталса вылять. Кам – кама? Кам – манра. Çапах та... Анат Тули кăмăлĕпе те, арçын пултарулăхĕпе те вăйлăрах. Ачча Ваççи – хĕрарăм çемçешки, мул хуçи, унăн чури, пăхăнтармăшĕ. Пăру – арçын. Музăна çапах та паянлăха Ачинах çырлахтарать, унăн та пурăнса юлас килет пуянсен ашкăнчăк тĕнчинче, ишес килет Пуянлăх тинĕсĕнче. Ан тив, тĕк вĕçтерччĕри хăйсем хушшинче тесе ăшĕнче кулать.

Ах, кашниннех çĕнтерес килет, çав ырлăх мунчинче тарлас килет, çав милĕк çулçи айĕнчи çăлкуçранах шыв ĕçес килет: тăранса та, тăранмасăр та... Ачча Ваççи те Музăшăнах çунать:

– Тăнла, Анатолий Микитович, эпĕ те ăна юратсах ĕçе вырнаçтартăм вĕт. Ой, мĕн тери лайăх мана унпа... Манăн, тĕнче бизнесменĕсемпе тĕл пулнă вăхăтра, хам çумра тĕлĕнмелле илемлĕ чĕрĕ пукане тытас килет, унпа вĕçĕмсĕр йăпанас килет. Çапах та эпĕ çеç ăна телей кӳме пултаратăп. Хальхи пурнăçра эсир ăна, культура чури-нушийĕ Микитов маэстро, çаракутлантарса çеç хăварма пултаратăр. Çапах та пĕтĕм пурнăç, пĕтĕм пурлăх, пĕтĕм влаç пирĕн алăра халь. Истори урапине каялла çавăраймăпăр. Раççейĕн Савраски чăхăмланă. Эпир – вутлă ут çинче! Пĕлетĕр-и ман мул-пурлăх миçе миллиард чухлине? Пĕлсен палтах кайса ӳкетĕр ак.

Хăйне строй умĕнче çирĕплетнĕ пек Микитов ăна хирĕç таварса калать:

– Ан мухтанăр. Вăрланă пурлăх. Ултав. Малашлăхсăр пурнăç. Ача чухнех Джек Лондонсене вуласа ывăннă ылтăн хуйхи çинчен. Тĕнчери халăхсен чи ăслă çыннисем нихçан та ылтăна чи мала хуман. Ăслă сăмаха, халăха усă паракан çĕнĕлĕхе, ăшран шăранса тухакан илеме чи мала хунă. Ĕмĕрсем тăршшипех çав виçĕ пахалăх ламран-лама куçса пынă. Авă, епле ташлать çав хумханăвра пирĕн Муза та: хавхалануллă, туйăмлă юрату илемĕн турри Афродита та, ташă турри Терпсихора та, юрă турри Мельпомена та вăл. Сирĕн ылтăн кăшăла татса тухнăскер. Епле çаврăнать? – баянне вăйлăрах калать. – Ылтăншăн çунакан, мулшăн хапсăнакан яланах вăхăтсăр...

– А-аа-а... асаннӳ хыççăн ылханса эсир мана халех çĕре чикесшĕн те ĕнтĕ, хăвăр вара Музăпа...

– Вилĕ чун патне çывхармасть вара Муза, – хĕсет ăна Анат Тули. – Эсир, Василий Данилович, каçарăр та, тахçантанпах вилĕ чун.

– Ви-илĕ чу-у-ун?.. – сăнран ӳкет Ачча Ваççи. - Парап сире ак вилĕ чун... Çиччас телохранителе чĕнсе килетĕп. Ман вĕсем: полковниксем те майорсем – мафисем, тĕнче чемпионĕсем-каратистсем. Пĕри кунтах, машинăрах. Туххăмрах вĕрентет сире мĕнле калаçмаллине-пурăнмаллине. Сăмса шывĕ эсир. Мана вилĕ чун тет тата...

Анат Тулишĕн ку хăрату пурпĕрех, вăл хăйĕннех çаптарать:

– Маншăн пулсан, хăть вунă генералпа сыхлăр вилĕ чунна. Хальхи генерал та вăл патша вăхăтĕнчи фельдфебель шайĕнче кăна. Телохранитель текенни пурпĕрех патша-президента та хӳтĕлесе хăвараймасть. Патшасен вĕсен урамра

ирĕклĕн çӳремелле, халăхпа калаçмалла, халăхпа ĕçмелле-çимелле, халăхпа татса памалла мĕнпур ыйтăва – халăх ырлăхĕшĕн, хăйĕн авторитечĕшĕн. Шăршлă пӳлĕмре пытанса ларсан вăл пушшех çĕрет. Урамра - уçăлать. Шутласассăн ăслăраххăн, кама кирлĕ-ши унашкал хăравçă патшасем? Камран хăраççĕ-ши вĕсем урамра утса çӳреме? Уписательнă çăмăлланмалли шăтăк тавра та виççĕн тăраççĕ тет те хуралласа. Юрату асамĕнче те кĕлетке сыхлавçи çумĕ пур-ши вĕсен? Шутласан, камах кирлĕ-ши вĕсем? Вĕсем ырăнне ыранах вунă патша хатĕр. Ăслă халь халăх. Мухтанчăк-йăпăлкăша юратмасть. Çынна сăмахпа çăмах çитерейместĕн, çынна хăвăн мухтанчăкупа мухтава кăлараймастăн. Çынна ăна ... тĕрĕслĕх, тĕрĕс шанчăк, тĕрĕс çăкăр кирлĕ. Суялăх, хапсăнчăклăх, ашкăнчăклăх – патшан хӳри вĕçĕнче юлать, анчах та унăн хӳри мулкачăнни пекех кĕске. Эпир ăна тытаймастпăр. Эсир вара, Василий Данилович, çав хӳрене тытасшăн, çав хӳре айĕнчи шăршпа пурнăçна тутлантарасшăн çунатăр, паллах. Çапах та эсир те, вĕсем те – вилĕ чун. Маншăн пулсан, хăть генералсемпе сыхлăр хăвăрăн вилĕ чунна. Çакна çеç ан манăр, çĕр телохранитель пулсан та патша-президент пурпĕрех сыхланса юлаймасть. Кирлех пулсан... Акă мĕн, халăх юратăвĕ çеç – çирĕп броня. Ой, чăнах вилĕ чун эсир. Мĕншĕн тесен, сирĕн йăх ĕмĕрĕпе халăха улталаса-çаратса пурăннă. Сирĕн йăха халăх ылханса çак çĕртен, ялтан уйăрнă. Мĕншĕн тесен эсир халĕ, пытанса выртнă хура çĕленсем, курпун сыснасен йăштавĕнче хĕвел питтине явкаланса тухрăр, чăрăш лăсси хӳтлĕхĕпе халăх юнне ĕçме пуçларăр, вăранса пуçа çĕклерĕр, патшалăх пурлăхне, халăх вуншар çул пухнă пурлăха явакласа илтĕр. Ҫалăхăн илемне, пуласлăхне хура чатăр хыçне пытартăр. Сире халăх ылханса юнать, йĕре-йĕре чышкă кăтартать. Акă мĕншĕн вилĕ чун эсир, Ачча Танлин пĕртен-пĕр мăнукĕ – Василий Данилович Ачин тата сирĕн ултав, ыçлăх компанийĕ.

Ачча Ваççи пӳрнипе юнасах хăпартланать:

– Çук, пулмасть унашкалли – халь тин пире хирĕç тăрасси. Ваттисем – виле шăтăкĕ умĕнче, çамрăккисем – пирĕн çурăм хыçĕнче. Патшалăх пирĕн алăра. Çĕршыва эпир мĕнле çулпа пăрма пултаратпăр – çапла пăратпăр. Эпир – çĕнĕ рулевойсем. Пĕтĕм тĕнче пулăшать пире. Сире, выç кашкăрсене, мĕскĕнсене... Сирĕн йăх, Кашкăр йăхĕ, асăрханăр... – пăшал мушкинче тăраканскер. Эсир пĕтернĕ пире. Эсир!

Анат Тули баянне лартать, çав вăхăтрах хуравлама ĕлкĕрет:

– Пĕлетĕп. Илтнĕ асатте каланине те, атте аса илнине те. Тĕрĕс тунă пусмăрçăсемпе вăрă-хураха хĕссе. Мĕншĕн сирĕн мулшăн пилĕк авмалла, выçăллă-тутăллă, çĕтĕк-çатăк пурăнмалла пулнă вĕсен, чухăнсен? Кăклайман çав тĕп тымарне сирĕнне. Вĕлтрен пек каллех тапса тухрăр акă: пур çĕрте те.

– Çапла, эпир вăйлă. Хăрамастпăр. Ешеретпĕр. Пĕçертетпĕр. Сире, ухмахсене...

– Çитет тавлашса! – чарса лартать ăна Микитов. – Вĕçне-хĕрне тухаяс çук. Икĕ полюсра, икĕ çыранра тăратпăр. Муза, кил кунта?

– Мĕн каласшăн? – унталла çаврăнать хĕр. – Пайласа çитертĕр-им мана? Кам аллине лекет ман тутăр? Ташласа çĕнсе илместĕр те...

– Сан якăлтатасси... – тарăхăвне пусараймасть Ачин.

Ума çитсе тăнă хĕре куçран пăхать Анат Тули:

– Чĕресем пирĕн тахçанах пĕрле. Хамăрпа чухне эсĕ те итле, Муза. Хамăр йăх çинчен ку таранччен те каласа паманччĕ-ха сана, çак пуçтах та итлетĕр. Атту

сан Василий Данилчу тек мана Кашкăр йăхĕпе хăртать. Усал çын пулман пирĕн несĕлсем. Чăнахах та эпир тахçан Волковсем пулнă. Уншăн эпĕ мухтанатăп.

Чăтаймасть Муза, иккĕшне те питĕнчен чуптăвать:

– Ан вăрçăр. Ман савăнас килет.

Ачча Ваçси ăна аллипе сулать:

– Арçынсен калаçăвне хĕрарăмăн хутшăнмасан та юратчĕ. Эпир хамăрах майлаштарса шайлаштаратпăр. Итлес-ха сирĕн юмахна, Анатолий Микитович.

– Пĕррехинче, – тет Анат Тули, – сĕм вăрманта пурăнакан чăвашсем çине кĕтмен-туман çĕртен питĕ тискер йăхсем килсе тапăннă. Халăх вĕсене хирĕç кĕрешме тытăннă, анчах çĕнтереймен. Аптранипе вара чăвашсем пуçтарăнса сĕм вăрмансем витĕр урăх çĕрелле тарма пуçланă, анчах чăтлăхра аташса кайнă. Вĕсем Пихампар турра кĕл тунă. Çав вăхăтра шап-шурă кашкăр сиксе тухнă та чăвашсене хăй хыççăн пыма хушнă. Утсан-утсан сукмак курăнса кайнă. Çынсем хĕвеллĕ те хитре уçлăха, çырма пуçне тухнă. Ак çак çăлкуçа уçнă, ун çумне ял лартнă. Ăна Чĕркуç ят панă. Çав çынсене кашкăрпа ертсе пыраканни манăн аслăран та аслă асатте пулнă. Хăйсене вилĕмрен çăлнăшăн вĕсем кашкăра ĕмĕрĕмĕр пуççапса пурăннă. Куçкă пичче каланă тăрăх, çимĕкре чӳк туса халĕ те асăнаççĕ çав кашкăра, унпа пĕрлех – манăн несĕле те.

Тĕлĕннĕ Муза аллисене пĕç çине çапать:

– Ой, питĕ интереслĕ. Ой, питĕ пархатарлă йăхран тухнă эсĕ, Анатолий.

– Паллах, – мухтанать Микитов, – паллах Кашкăр йăхĕнчен. Ачча Танлисен шăршлă йăхĕнчен мар ĕнтĕ. – Ачча Ваçси еннелле çаврăнать. – Ялта сирĕн кам пур? Шăршийĕ те çук. Итлĕр-ха, тăнлăр ман йăх сасси епле янăранине?

Тимĕрçĕ лаççинчен мăлатук сасси илтĕнет. Ачча Ваçси ăна çурăмпа хупласа таврать:

– Эй, пустуй япала. Ухмахсене тыттармалли халап. Илтнĕ те такамран темле юмах. Эсир авалхипе мар, хальхипе пурăнăр, пурнăç чăнлăхне витĕртерех пăхăр. Умрине. «Пуçана» пулатăр-и эсир, Анатолий Микитович, юрату ăмăртуçи-и, хамăрьял-ентеш-и, невашнă, анчах... суккăр музыкант çеç эсир. Сирĕн юрру-ташшу вăл, выçăллă-тутăллă пурнăçра, такама кирлех пуль... Атя, Муза, машинăра полковник-телохранитель кĕтет. Ун паян МВДна, коллеги ларăвне, палăртнă вăхăтра çитмелле, Мускавран килнĕ коллега-тусĕсене хăйсем вăрă-хураха хирĕç мĕнле майпа кĕрешнипе тĕлĕнтермелле. Вĕсен опытне Раççейĕпех сарасшăн тет. Хăнасене чаплăн пăхма, хаклă парне парса яма укçине хĕрхенмерĕм-ха. Вĕсемшĕн, хамăр хӳтĕлевçĕсемшĕн, ним те шалккă мар. Эпир камсем пулнине тата камсемпе ваç-ваç ĕçленине ан манăр. Сыва юлăр, маэстро! – Музăн тутăрне туртса илет. – Акă камра тутăр. Акă кам аллинче Терпсихора. Акă кам пуçĕ тăрринче Çĕнтерӳ!

Муза каялла туртăна-туртăна çухăрать:

– Анатолий?! Толенька? Каçар мана...

Куçук Куçки, пĕртăван хĕрсем, Лар Иванĕпе Сава Савви çитеççĕ. Кузюков хыпăнса ӳкнĕ:

– Ай, ман... çак тĕлĕнмелле хĕрпе вакламалли пурччĕ. Чун йăшкать. Ĕнер ăна курнăранпах, паян курса калаçнăранпах. Тем, ырра мар пуль ку.

Лар Иванĕ пушшине шартлаттарать те, аслинчен куланçи пулать:

– Çапла çав вăл хăвăнтан çамрăккине юратса пăрахсан. Сăпкара утьăкка сиктернĕ чухне арçын чĕри тапма чарăнни те пулнă тет хăшĕсен унашкаллисемпе, Куçкă кукки, асăрхан çĕре çитес тесен...

– Мĕн ихĕрен пĕлмесĕр! – хăмсарать ăна Кузюков. – Ĕлĕк-авалтан ват ар сынна çамрăк хĕрарăмпа сыватнă. Хайĕнчен çирĕм-вăтăр çул кĕçĕнреххипе.

– Пире тем мěслечě ан вěрентěр-ха, Куçкă пичче. Хамăртан çирěм-вăтăр çул аслăраххи патне сывалма кайма тытăнăпăр та эпир те... Ял-ялěнче ахаль те ват хусахсем карчăксен хуп хушшине кěрсе ўкнě, вěсен пенси укçипе ěçсе-çисе пурăнаççě.

Кузюков ăна хытах чěпěтет:

– Эсир те вěсенчен ўксех юлмăр-ха, Валак Валькин виç йěкěрешне те типěтсе хăварăр-ха...

– Чěр тымар Чěркуçра çеç мар, – хăйсене асăннипе çил-тăвăлла çавăрттарса хурать Лили.

– Карттус тăхăнакан хулара та пур, – йěплет Вероника.

– Хăçан та пулин пирěн кăкăрсем те ромбикпе çиçěç-ха. Ун чухне эпир те така мăйраки суйлама пуçлăпăр, – вěсенчен юлмасть Люба та.

Ытарлă калаçăва тăнласа тăракан Сава Савви алă сулать те Анат Тулинчен ыйтать:

– Чăваш миллиардерě мěн юмаххи çаптарчě?

– Камăн мěн ыратать, мěн кěçěтет ěнтě... – ирěксěртереххěн калать тусě. – Пуянлăхěпе мухтанчě. Кěçех пире чура-тарçă тăватăп тесе хăмпăланать.

– Юрě-ха, эс тăхта, – тесе Сава Савви хурал пўртне пушартан тем çăлас пек вашкăртса кěрсе тухать те тути-çăварне ал тупанěпе шăлса илет. – Ачча Ваççи виç хут миллиардер пулсан та, пурпěрех мана США-на кайма пулăшас çук. Çавăнпа хамăн пуçарупах... штачěсене сурăм. Аллăран самаях чакнă. Сирěн ирěксěрех США-па Кубăна пěрлештерме тивет. Китайне ăна ан та тěкěнěр. Вăл пěр тумламшăн та пěрмай асăрхаттарать. Вěлерессипе хăратать. Пăкки шанма пултарать.

Куçук Куçкин те хăлха та, куç та пур, сěмсěрленнě качча вăл пўрнипе юнать:

– Мутри сана, тупăннă революционер. Йěрке туса çўрет. Сана?!

Аяккалла пăрăнса тăнă Любăн ачаш юрри вěсен калаçăвне хуплать:

Уйри çиле тытаймăн
Тесе каланă ваттисем.
Манран иртсе каяймăн,
Иккěленмесěр итлесем:
Эпě çилрен те шухăрах.

Анат Тули баянне Лар Иванне хăварт тыттарать те «Эс малалла кала» тесе чупса каякан хěр хыççăн сиккипе вěçтерет:

– Люба, тăхта?!

Лар Иванě хěрсене кăчăк туртать:

– Репетици малалла пырать, шăпчăксем.

Хитре кěвěпе Куçук Куçки юрласа ярать:

Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атти-анни...

Пурте юрлаççě:

Ай-йай-йай-я...
Аки-сухинчен уйрăлас çук,
Атти-аннине, ай, манас çук...

Машина кěрлевě пěрре тамалать, тепре амалать. Валак патнелле Муза чупса килет, ун хыççăн Ачча Ваççи хăшăлтатать. Муза кăшкăрать:

– Анатолий, ăçта эсě?!

Ачча Ваççи Музăна çавăрса тытать те айăкран паклаттарать, машина патнелле тапăлтаттарса каять. Вĕсем хыççăн Лар Иванĕ пушшине шартлаттарать:

– Тасални паха кĕтмен хăнасен. Атьăр, юрлар!

Пурте юрра пикенеççĕ:

Асран кайми пĕлĕш-тантăш,
Пуринчен пахи ял-йыш, пускил...
Виличчен пĕрле, ай, пурнар-и?
Ай-йай-йай-я.

4

Тепĕр çултан. Сут çанталăк та ăшă ашкăрура. Ӳсен-тăран эмелĕ сывлăшра сарăлнă. Ассăн сывла çеç, ăшна сут çанталăк аптекин мĕн пур сиплевлĕхĕ юхса кĕрет. Пӳрт чӳречинчен Куçук Куçки пусне кăларса пăхать. Вăл анасласа шăна хăвалать. Алăк уçăлать те, баян йăтнă Анат Тули тухать.

– Ку мăн купăса ĕнтĕ эс, – тет сад хуçи, – пĕлтĕртенпех ман патра усратăн. Çăлкуç умне те концерт лаптăкĕ туса хутăн. Ахальтен лартмарăмăр пуль сана, шăллăм, авалхи ват Кашкăр çурине, ялти культура министрĕ пулмашкăн.

Микитов баянне нăртлаттарса хавас кĕвĕ калать:

– Йăнăшмарăмăр пулас, Куçкă пичче. Турăмăр вĕт ансамбль. Во! Хоппа! Юрăçисем те Шупашкар енчен якăлтатса вĕçсе килекен купăста лĕпĕшĕсем мар, фонограмма хыççăн çăвар карса авкаланакан сăрă хуртсем те мар. Ташăçăсем те шупашкарсемпе мускавсенчен ним мар ирттереççĕ. Эпир вĕт вăл – Куçкă пичче?

Чӳрече сумне пырса тăнă Микитова Куçук Куçки çăра çӳçлĕ пусĕнчен ачашлать:

– Чĕркуç шывĕ чĕрех çав. Ачча Танлин мăнукĕ яла вăрттăн килсе сутакан наркăмăш шывĕнчен имлĕрех те симлĕрех. Вăрнар радиовĕпе хаçатсенче хыпарланисене шутласах пыраттăмччĕ-ха. Коммерци кӳллинче ишекен çĕр вунă арçын Вилкуçа путнă. Районти вăйпитти çын çулталăкра çавăн чухлĕ чакнă! Вăл шутра хамăр ялтанах – вуннăн. Хуняму пулмалли Нинук мĕн тери чиперккеччĕ. Çамрăк чухне хам та сахал мар сĕлеке юхтарнă унпа киленсе. Тулькăш ăна Валак Валькки çавăрса илчĕ. Иккĕшĕ те çак валакран юхакан симпыла тек тутанаймĕç ĕнтĕ. Пĕр кĕленчерен пĕр йышши шĕвек мехлесе пĕр каçра сыв пуллашрĕç Чĕркуçпа. Виçĕ йĕкĕреше тăлăха тăратса хăварчĕç. Суда памалла ăна, Ачча Ваççине, чăваш халăхне наркăмăшпа пĕтерсе пынăшăн. Халăх умĕнче çакса вĕлермелле. Ӳтне çунтарса ямалла. Кĕлне çавра çилпе вĕçтерсе ямалла. Тĕп пултăр! Тĕп пулччăр унашкаллисем пурте – çын çиен аçтахасем. Эх, Турри çуккă пуль çав... Пулсан, вăл Ачча Ваççисене тахçанах леш тĕнчене...

– Эх, Куçкă пичче, – лĕх-лĕх тăвать Анат Тули. – Судне кам тăвать? Ачча Ваççисем суд-прокуратурине, милици-полицине те, влаçне те, Туррине те хăйсен аллине çавăрса илнĕ, укçа миххине чăмтарнă. Мĕн, районтисем пĕлмеççĕ тетĕр-им Вăрнарта, ялсенче миçе точкăран наркăмăш юхнине? Кури куçа курмăш тăваççĕ. Милицийĕ йĕке хӳре пек хунаса кайнă. Кĕçех кашни районта дивизи пулать ак. Ĕççĕр аптăраса вĕсем халăхăн юлашки йĕмне хывса илме хатĕр. Чакаланма пуçла-ха, çиччас пăсăрлантарма тытăнаççĕ Шупашкартан: начар ĕçлетĕн, малашлăхна çунтаратăн... Мулпа, ылтăнпа сутăн илнĕ. Пурне те. Таса çын курмастăп. Паллах, хура халăх хушшинче мар – çав пуçлăх, коммерсант, предприниматель, тем мурне ертсе пыракан хушшинче. Мана çеç çавăраймарĕ çăткăн кĕтĕвĕнчи Ачин хаспатин. Улталаса илсе каяймарĕ ялтан.

– Ай сана та серепене лектересшӗнччӗ?

– Ҫапла вӑл ман пултарулла «пуҫана». Намӑс-симӗсе ҫухатнӑскер. Хайпе тавлашни-хирӗҫни те ним мар уншӑн. Йалтах каҫарать хайӗн ырлӑхӗшӗн. Ҫавӑн пек вӑл – мул тӗнчи. Совеҫ тени ҫук унта. Чи малта тупӑш тени, ҫаратса-ултала-са тупнӑ укҫа купи тӑрать. «Ял лӗпӗшӗсемпе мар, хула шӑпчӑкӗсемпе ҫавӑрттаратӑн, ман ресторанпа казинора ҫӗршер пин тӑвататӑн, енчӗкна уҫма кӑна пӗл», тесе илӗртсе йыхӑрчӗ вӑл мана.

Куҫук Куҫки ӗнсине хыҫать:

– Чӑнах-и? Ай-вай-вай, ҫавӑн чухлӗ укҫа... Эс пур, пус-тенке шутласа тӑнран каян.

– Чӑн пулмасӑр. Уншӑн укҫа мӗн вӑл? Хут купи. Ылтӑн чӑмӑркки. Ӑна вӑйлӑ ансамбль, ҫамрӑк хӗрсем кирлӗ. Чӗркуҫ Илемпийӗсенчен вӑл аскӑнчӑк тряпкӑсем туса хурасшӑнччӗ. Вӗсен симпылне хаклӑ хакпа сутса чӗрӗ ӳт усламӗ тӑвасшӑнччӗ. Казино текенни унӑн шӑпах ясар йӑви – аслӑ ҫӗрте ӗҫлекенсемпе мул хуҫисен ясар пасарӗ.

– Валак Валькин Лилипе Вероники те, Люби те проститутка пулма килӗшетчӗҫ-ши вара? – тӗлӗннине пытармасть Кузюков.

– Эсир вӗсене ан тӗкӗнӗр, – кӑмӑлне улӑштарать Микитов. – Анчах хамӑр ялта та тем шухӑшли, вӑрӑм укҫашӑн ҫунаканни тупӑнма пултарать. Ӑҫта тата мӗнле пыл каткине лекет.

– Ҫаплах пуль ҫав. Хам та куркаланӑ та ирӗлчӗксене-шеплешкесене. Парижа-Шупашкара каймасӑрах. Чӗркуҫрах.

– Ман чун туртмарӗ Ачин хаспатин патне. Ман ялтан уйрӑлас килмерӗ. Тӑван Чӗркуҫӗнчи тӑван «Ҫӑлкуҫа» пӑрахса хӑварас килмерӗ.

Йӗкӗлтесе илесшӗнех Куҫук Куҫки, кулкалать:

– Хе-хе. Пӗрер ҫул ӗҫлесе пуйса килме юратчӗ-ха.

Анат Тули урам енне тӗллесе кӑтартать:

– Пӗрре лӑпланнӑ чуна хускатас мар. Авланатӑп та, авӑ, ҫавӑнта, сад ҫумӗнчи пуш вырӑнта пӳрт лартатӑп, кил ҫавӑратӑп, пурӑнатӑп арӑмпа, ача-пӑчапа савӑнса. Культура ҫурчӗ пур ман, ялти шкулта «консерватори» пур, ача садӗнче тепӗр ӗҫ вырӑнӗ пур. «Ҫӑлкуҫ» пур. Урӑх мӗн кирлӗ?

– Э-эй, шӑллӑм, – пуҫ пӳрнипе сӑмсинчен тӗртсе илет вӑл ӑна. – Ҫуралман тихан пилӗкне ан хуҫ-ха эс. Эп пулас мӑшӑру пирки калатӑп. Арӑму ҫуккӑ-ха хальлӗхе. Мӗнле хӗрарӑм тӗлне пулатӑн унта. Валак Валькин йӗкӗрешӗсене такки сиртен пӗринчен те пулмарӗ уйӑрса арӑм тӑвасси. Вӗҫсе тарчӗҫ вӗт иртнӗ кӗр сиртен, меммесенчен, кӑнтӑра вӗҫекен кайӑксем пекех... Начар, начар эсир, Эх, хам мар! – Пӳрнисемпе шаклаттарса илет. – Пулнӑччӗ манӑн та савӑк вӑхӑт. Килнӗччӗ пӗррехинче яла пӗр чиперкке учительница Шупашкартан. Вӑшт-ваш ҫеҫ паллашса аташса илтӗмӗр. Хырӑмӗ ак халь ман хырӑм пек шӳсен киле хваттере ятӑм. Арӑм ман, майра, манпа хирӗлсе, кӗвӗҫсе, ашшӗ-амӑшӗ патне Ҫӗпӗре тухса кайрӗ. Ку чиперккипе пурӑнсах каяп пуль тенӗччӗ. Сӗре ташлама юрататчӗ. Леш, Шупашкар ансамблӗнчи сан Музӑран ейпух ирттерет. Балеринӑна ятарласа вӗренмен пулсан та. Во класс!

– Эп курман-илтмен те... Ӑҫта кайса кӗчӗ вара чиперккӳ?

Чӳречерен сикет те Куҫук Куҫки, хӑпартланса аса илет:

– Ан та кала-ха. Ҫапла пӗр ирпе Ачча разъездӗнчен ман майра-арӑм хӗвеллӗн ҫиҫсе килет. Каллех кирлӗ пулнӑ эпӗ ӑна!

– Мӗн пулса тухрӗ-ха вара? Ик хӗрарӑм – ик арӑм...

Кузюков ӗнсине хыҫать:

– Ман кив арӑм ҫӗн арӑма ҫӳҫ тӑпӑлкки мӗнлине кӑтартрӗ те... Хӑюллӑ ҫав вӗсем вырӑссем. Йӗре-йӗрех тухса сулланчӗ вара ман чиперккеҫӗм: килтен те, ялтан та...

– Ачине ҫуратнӑ-ши ҫав хӗрарӑм?

– Пӗлместӗп. Унтанпа курман-илтмен.

– Мда. Вӑт пурнӑҫ.

– Ҫапла, пурнӑҫ вӑл хыптарать пӑрӑҫ, – шывланнӑ куҫне шӑлса типӗтет халапҫӑ. – Кивви те пӑрахса кайрӗ. Яланлӑхах. Унпа ача тавраш ӗ пулман. Ашшӗсем патне Ҫӗпӗре пӗрле чӗнчӗ. Каймарӑм. Ватлӑх енне пуссан тин уйрӑлас килмерӗ тӑван ялтан. Ак ҫак сада ӳстертӗм. Чун уҫҫиллӗх. Валак Валькин валакне хураллатӑп. Хушӑран ҫӑлкуҫ шывӗ пек юхса анать те куҫҫуль...

– Арҫын пуҫӗпе макӑратӑр-и?

– Куҫҫуль вӑл, шӑллӑм, хӗрарӑмӑн анчах мар, арҫыннӑн та пур-ҫке. Тепӗр чухне, США штачӗсене шутланӑ хыҫҫӑн... Итле-ха эс мана?

– Мӗн?

– Куҫа витӗртерех уҫса пӑхрӑм та пӗлтӗр, ҫав Муза текен балерина ман тахҫанхи ҫамрӑк арӑм Луиза сӑнлӗ туйӑнса кайрӗ. Ейпух.

Баянне каламасӑр чӑтаймасть Анат Тули, хуллен ҫемӗ кӑларать:

– Ҫав чиперккене манманран вӑл, Куҫкӑ пичче. Сӑнар вӗҫевӗ. Эпӗ те ниепле те манаймастӑп-ҫке Музӑна. Любӑна юратсан та... ҫук, манаймастӑп. Эх, Муза, Муза, виҫӗ муза, маншӑн виҫ хавхалану, маншӑн эсӗ виҫ ҫӑлкуҫ: Шухӑ шухӑш, Асӑну, юрра хывнӑ Юрату.

Аллине сумка тытнӑ, хулӗ ҫине плащ ҫакнӑ Люба ҫывхарать, вӗсене аякранах саламлать:

– Аван-и? Мана епле музыкӑпах кӗтсе илетӗр-ха. Автобусран ансанах илтӗнет.

– Ак сана «виҫӗ муза», – Куҫук Куҫки Анат Тулине айӑкран кӑлт тӗкет. – Юрра хывнӑ юрату вырӑнне ҫурӑлнӑ, чечекленнӗ Любка. Улӑхри Любка, чечек. Ай-вай-вай. Пӑч ҫухалам-ха эп.

Каччӑ хӗре хирӗҫ хавассӑн утать:

– Сывах-и, чунӑмҫӑм? Сесси вӗҫленнӗ ятпа. Яла таврӑннӑ ятпа.

Люба качча ыталать:

– Тунсӑхласах ҫитрӗм. Экзаменсем вӑхӑтӗнче те куҫран ҫухалмастӑн. Пырап терӗн – кӗтсе илеймерӗм.

– Каҫар, чунӑмҫӑм. Район смотрне хатӗрленмелле пулчӗ.

– Пирӗнсӗр мӗнле юрларӑр-ташларӑр-ха?

Анат Тули баянне туртса ярать:

– Яланхиллех. Хамӑр «Ҫӑлкуҫ» юххиллех. Вӑйлӑ. Во! Хоппа!

«Ох, сывлӑшӗ! Чун уҫӑлчӗ», – тесе ҫаврӑнса илет те Люба чӑтаймасть, юрлать:

Шывран таса пулаймӑн
Тесе каланӑ ваттисем.
Манра усал кураймӑн,
Иккӗленмесӗр итлесем:
Эпӗ шывран та тасарах.

– Эх эсӗ, Чӗркуҫ ҫӑлкуҫӗ – манӑн пурнӑҫ ҫӑлкуҫӗ. Хӑҫан ӗҫсе курӑп-ши унӑн ӳсӗртекен шывне? – хӗр куҫне тӑрӑнать йӗкӗт.

Люба вӑтанчӑклӑн пуҫне чикет:

– Курӑн-ха, тутанӑн-ха. Малтан вӗренсе тухам. Тата виҫӗ ҫул ҫеҫ юлать.

– Виҫӗ ҫу-ул? – аллисене сарса пуҫне пӑркалать Анат Тули.

– Мӗн вӑл виҫӗ ҫул эп сана ҫирӗм пӗр ҫул кӗтнӗ хыҫҫӑн? Пӗлтӗртенпе вилмерӗн-ҫке. Чӑтрӑмӑр.

Анат Тули хӗре ыталаса илет:

– Тем те шухӑшлатӑп сан ҫинчен...

– Мӗн пирки? Мӗн?

– Ара, «Молодежка» вӗҫӗмсӗр студентсен аскӑнчӑк пурнӑҫне сӑрлать те...

Хӗр пӑрӑнса тӑрать:

– Нивушлӗ эс вара мана ҫавнашкалах аскӑнчӑк хӗрсемпе танлаштаратӑн?

– Каҫар та... Хулара унта, хамах пӗлетӗп, ултавҫӑсем нумай! Ачча Ваҫҫи пек тилӗсем. Укҫалла, миллионла туянаҫҫӗ хӗр чысне.

– Ман чыса миллионпа та, триллионпа та туянаймӗҫ. Эпӗ сана ҫеҫ... сана ҫеҫ юрататӑп, – тата туйӑмлӑрах ыталать Люба качча.

– Унта каскӑнҫӑсем те сахал мар. Асӑрханмасан... Ушкӑнпа хӗрсен пӳлӗмне пырса кӗреҫҫӗ тет те... Чи тасисене те вараласа хӑвараҫҫӗ тет.

– Унашкалли... Тетпех юлтӑрчӗ. Турӑ ҫӑлтӑрах. Пӗлетӗп. Лилисен университетӗнче те пит хыт ашкӑнаҫҫӗ. Вероника та Мускавран ҫырса янӑччӗ студентсен проституциййӗ мӗнле шайра пирки. Чӗлхе ҫыхланать ман вӑл сӑмаха калана чух. Атя, кала баянна.

Анат Тули кӑмӑллӑн калать:

– Хӑвӑн юрру.

– Иксӗмӗрӗн. Сана курнипе паян... Юрламасӑр епле чӑтан. Чун юрлать:

> Ылтӑнпа ҫеҫ пуймӑн
> Тесе каланӑ ваттисем.
> Манран хакли тупаймӑн,
> Иккӗленмесӗр итлесем:
> Эп ылтӑнран та хаклӑрах.

Чӑтаймасть Анат Тули, юратнӑ хӗрне ыталаса чуп тӑвать:

– Чӑтмаллах пулать пуль ылтӑнран та, темрен те хаклӑрах пуянлӑха алла иличчен. Виҫӗ ҫул. Ой-ой! Ватӑлса каятпӑр.

Люба шӳтлет:

– Ватлӑхра анне пек виҫ йӗкӗреш ҫуратса паратӑп та сана... Ҫитет вара пире. Эх, анне... Хӗрӳсем качча кайнине те кураймастӑн, кӗрӗвӳсемпе кӗрекене те ларса юрлаймастӑн.

Ӑна итленӗ май Анат Тули кӗреке юррин ҫаврӑмне янраттарса илет:

– Ӗҫкӗҫ чирӗ вӑл пит йывӑр чир теҫҫӗ те, сывалмалли эмел тупаймарӗҫ ман пулас хунямапа хуннӗм. Шалккӑ. Ватӑлмасӑрах каяҫҫӗ ӗнтӗ вӑй питти ҫынсем таҫталла – пачӑшкӑсем кӑтартнӑ ҫулпала.

– Вӗсен, Турӑ ҫыннисен, пурнӑҫ пыл та ҫӳ-ха. Пире ҫӳлти патшалӑхри ҫӑтмахпа илӗртсе пуҫ ҫавӑраҫҫӗ. Анчах шел, вӗсен те ҫулӗ пирӗнни пекех – пӗр ҫӗреллех. Аттепе анне те...

– Ытлашши ан хуҫӑл-ха. Лӑплан, – каччӑ хӗре пуҫран шӑлать.

Люба куҫҫуль витӗр калаҫать:

– Атте-анне ҫук чухне пуш пӳрт кӗтсе илет. Вероникӑпа Лилине шута хумастӑп эпӗ. Вӗсем те кулянаҫҫӗ. Кӗретӗп те, анне сӗтел ҫине вӗри яшка чашӑкки ларса

панӑ пек, пирӗ халь эс мана ачашланӑ пек ачашланӑн туйӑнать. Аттен ун ялан хуҫалӑх ӗҫӗччӗ. Ӑна эпир сава туртса пама юрататтӑмӑр. Хӑма ҫинӗ хирӗҫ лар允таттӑмӑр та. Анне вӑл ахаль те темшӗн ытларах ҫумра: чун ыратсан та, ӳт-пӳ йывӑрлӑхӗ-канлӗхӗнче те... яланах, «анне!» тетӗн. Эх, аннене, ӑна, виҫ йӗкӗреше ҫуратса пӑхса ӳстернӗшӗн тав тума та, кирлӗ пек савӑнтарма та пӗлеймерӗмӗр пуль. – Валак патне пырса тӑрать. – Ҫуралсан пире атте-анне ҫак ҫӑлкуҫ шывне ӑшӑтса шыва кӗртнӗ – чӑпӑл тунӑ, чӗрӗлӗх панӑ. Эпир ӑна ачаран ӗҫсе пурӑннӑ. Ӗҫем-ха халь те яла ҫитнӗ ятпа. Эх, анне-атте, атте-анне...

Анат Тули юрӑ ҫемми ӗнерет:

– Эсӗ кайнӑ хыҫҫӑн репертуартан тухса ӳкрӗ ҫак юрӑ. Юрласа пӑхар-ха. Ҫӗнетрӗм эпӗ ӑна. Лайӑхрах тӑнласа пыр. Ҫитес концертра шӑрантарӑпӑр.

– Юрӗ, аттепе аннене асӑнсах юрлам-ха, – тесе Люба чӗрере юлнӑ сӑмахсене аса илет:

Атте-анне ялан ҫумра,
Вӗсен сӑнарӗ ман умра.
Ҫемье, кил-ҫурт пулсан –
Ман пур атте-анне.

Вероникӑпа Лили чупса ҫитеҫҫӗ, «Люба килнӗ! Люба!» – тесе ҫухӑрашаҫҫӗ. Виҫҫӗшӗ те ытакланаҫҫӗ. Анат Тули баян каласа юрлать:

Атте-анне йӑха татман,
Вӗсен тымарӗ ман юнра.
Хурӑнташ, ял-йыш пулсан –
Ман пур атте-анне.

Юрра хӗрсем те хутшӑнаҫҫӗ:

Атте-анне пуҫа усман:
Вӗсен хӑвачӗ ман вӑйра.
Чӑваш, ҫӗршыв пулсан –
Ман пур атте-анне.

Хыҫалта лаша тулхӑрать. Пушӑ шартлатать. Лар Иванӗпе Сава Савви ушкӑн патнерех ҫывхараҫҫӗ те итлесе тӑраҫҫӗ, унтан, вӗсемпе пӗрлешсе, хӑйсем те юрлаҫҫӗ:

Атте-анне Турра сутман,
Вӗсен ыр пилӗ ман ӑсра.
Тӗнче, Хӗвел пулсан –
Ман пур атте-анне.

Вӗсем патне тулли сумка мекӗрленсе йӑтакан Куҫук Куҫки ҫывхарать. Тусӗсене тата ӑна курнӑ Анат Тули баянне лартать те черетпе алӑ парать:

– Салам сире пурне те!

– Сана, Туля, чӑнах та курман паян. Ирпе ача садӗнче шӗвӗрккесене юрлаттарнӑ терӗҫ те. Халӗ кунта юрлаттаратӑн. Аран тупрӑмӑр, – ҫурӑмӗнчен «лӑпкаса» илет ӑна Сава Савви.

Куҫук Куҫки шӑл йӗрет:

– Пулас кинсен сассине уҫать вӑл. Мутрите, тулккӑш ҫывӑрса ан юлӑр. Уйрӑмах сан, Иван, хӑрушӑ. Мускав вӑл... Вероника чечекне татас текен унта...

Лар Иванӗ пит шанчӑклӑн калать:

– Ан хӑра, тыттармасан... Шанатпӑр вӗсене. Хамӑрах..

– Эп кӑҫал Лилине заочно куҫарап, – ӗмӗтленет Сава Савви.

– Вара авланатӑн-и? – йӑкӑлтатса илет Лили. – Их-хик! Авланаймастӑн. Пирӗн заочнӑй уйрӑм ҫук. Кӗтмелле пулать тепӗр пилӗк ҫул.

Кӑна илтнипе Сава Савви кайса ӳкме тытӑнать:

– О-ох! Эх-ха-хай, пилӗк ҫуллӑха срокчен тултарма ҫук-ши, ачасем?

Люба кашнине пӳрнепе тӗллесе тухать:

– Лӗпӗртисем. Хӑйсем авланасшӑн ҫунаҫҫӗ, анчах мӑйӑхӗсене халӗ те ӳстермен. Мӗнле калаҫса татӑлнӑччӗ-ха эпир?

Анат Тули аса илет:

– Эпир мӑйӑх ӳстерсессӗн пире пӗр харӑс качча тухма шантарнӑччӗ.

Ял хӗрӗсен ушкӑнӗ килсе тухать те Микитов баян калама пуҫлать:

– Эх! Хоппа!

Куҫук Куҫки кутне ҫапса пӑркаланать:

– Малалла! Эп те хоплатам-ха.

Пурте ӗнтӗ ташӑ картинче. Варрине баяниста хупнӑ.

5

Ҫӗртме уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче, ҫурхи ӗҫсене ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ хыҫҫӑн, Чӗркуҫӗнче ӗҫпе юрӑ уявне ирттереҫҫӗ. Акча енчен шӑранса хӑпаракан хӗвел шевлисем яла ҫӗнӗ ӑшшипе ачашлӑхне парнелеҫҫӗ, авӑ. Акатуйчен вӑхӑт пур-ха. Куҫук Куҫки садран чечек татса тухать, пӳрт умӗнчи сӗтел ҫинчи вазӑна ярса лартать, магнитофон сассипе ташласа тутипе памплаттарать, юрлать:

Кӑмакара хуплу пур,
Сӗтел ҫинче сӑри пур.
Тӑвансемпе туслӑн ларса
Ӗҫес-ҫиес кӑмӑл пур.

Эх, тӑван, тус-тӑван,
Ӗмӗр пӗрле пурӑнар,
Ӗмӗр пӗрле пурӑнар та
Хамӑр йышпа савӑнар.

Юрлама чарӑнать те вӑл сӗткенлӗ сывлӑша кӑкӑр тулли туртса илсе уфф! туса кӑларса ярать, хул-ҫурӑмне ҫемӗҫтерсе карӑнать:

– О-ох! Тӗлӗкре ҫамрӑк арӑма курнӑ. Ҫаппа ҫарамас. Утиял ҫӗкленнипе вӑранса кайрӑм. Уфф! Ҫаракут хӗрарӑм тӗлӗкре курӑнсан ырра мар тет. Мӗн кӗтет-ши мана, ват пуҫа, паян? Э-э, итле, Константин Иванч, ытла та ир ватӑлмастӑн-и? Ха, Кузюкова халех туя тыттарасшӑн-и? Ух! Вӑй пур-ха. Тепре, тур калашле виҫҫӗ авлансан та, аптрамалла мар пек. Майлӑ хӗрарӑмӗ ҫуккӑ-ҫке тулӗк. Ҫамрӑкки - ҫамрӑк, хама майлӑраххисем ӗҫке ярӑннӑ. Хусах маткасем патне ват каччӑсем киле кӗре-кӗре пӗтрӗҫ. Хӗрсенчен хӑраҫҫӗ-ши вӗсем е ҫав пенсионеркӑсен укҫипе тӑранса пурӑнасшӑн, аптриш. Эх, ҫакӑнта пӗлӗтрен татӑлса анасчӗ халь пӗр таса Мария майли. – Ывӑҫне йӗкӗрлесе тытать. – Эх, вара… Хамӑр пулсан тӗнчере…

Машина кӗрлени, алӑксем уҫӑлса хупӑнни, сынсем шавлани илтӗнет. Кӗҫ чӑматан йӑтнӑ Кӑнавал Веналийӗ, мӑн сумка йӑтнӑ Муза тата лапсӑркка пӗчӗк йытӑ тытнӑ хӗрарӑм курӑнса каяҫҫӗ.

– Сывах-и, Куҫкӑ пичче? – сад хуҫине алӑ парать Кӑнавал Веналийӗ. – Мӗн, ҫӳлти аттепе пуплетӗр-им пуҫа каҫӑртсах?

Нимлемарланнă Кузюков Музăпа каччӑн аллисене пĕрлештерсе тытса чăмăртатать, пуçне пăркалать, куçне мăчлаттарать, ĕнсине хыçать:

– Аванах-ха, эп сып-сывах-ха, атьсем. Ай-вай-вай, эккей, Турă пурах-шим вара? Мана илтрĕ-шим? Ман заявкăна самантрах пурнăçларĕ-çке? Луиза, эсĕ мар-и ку? Луиза Лукинична! А-ах... – Хĕрарăма йыттипе пĕрлех ыталать. – Вăт телей.

Йытти найклатнипе хутăш хĕрарăмĕ те найлатса илет, арçынна ыталаса тутинченех хы-ыттăн чуп тăвать:

– Костя!.. Ой, виличчен курияс та çук пуль тенĕччĕ. Шăпа çулĕ шăпах илсе çитерчĕ.

Муза тĕлĕнсе аллисене шарт çапать:

– Анне, ăçтан пĕлетĕн эсĕ ăна, Константин Иванча? Пĕлтĕр пит лайăх, культурăллă хăналаннăччĕ эпĕ кунта. Çав тери ырă кăмăллă пичче вăл. Мучи тесен те юрать пуль. Кӳренместĕр-и, Константин Иванович?

– Эп ун пек те, кун тек те килĕшетĕп. Çиччас, – Куçук Куçки чупса кайса чечек çыххине илет те Луиза Лукиничнана тыттарать. – Тархасшăн, Чĕркуçне килнĕ ятпа. Хам ӳстернĕ чечексем. Эс юратаканнисем...

– Тавтапуçах сана, Костя, ман кăмăл-туйăма манманшăн, – тет Луиза Лукинична. – Хĕрĕмçĕм! Кĕрӳçĕм! Сирĕнпе эпĕ пĕр хăраса та, пĕр хĕпĕртесе те вăрăм çула тухрăм. Чĕре сиксе тухасран кăкăра тытса пытăм. Çак валак умне çитсен ура вăйĕ пĕтсе килчĕ... Муза, ах, Му-уза?

– Мĕн пулчĕ, анне? – пушшех тĕлĕнет Муза.

Луиза Ильинична куççульне шăла-шăла, чĕтревлĕ сасăпа хуллен калать:

– Çак çын вăл – эс çав тери ырă кăмăллă пичче е мучи текен çын – санăн тăван аçу пулать. А-ах, чĕрем...

Муза Куçук Куçки çине шăтарасла пăхать:

– Чăнахах-и? Ман та атте пур-и тĕнчере? Чăнах эсир, Константин Иванович, ман атте-и? Чăн-чăнах-и?

Чăтаймасть Кузюков, çывхарса, хĕрне ыталаса илет:

– Чăнах, Муза, ачамккă! Эп те телейлĕ иккен. Çапах та куншăн аннӳне ятламалла. Мана пĕлтерменшĕн. Мана хамăн ачана кăтартманшăн. Калап çав, пĕлтĕрех чун теме сисет тесе. Тăван юн таппи вăратрĕ пулмалла ман чуна та.

– Пĕлтĕр эпĕ сире хам ача çуртĕнче ӳснĕ, эпир виçĕ йĕкĕреш: Муза-Луиза-Лиза тесе суйнăччĕ. Каçарăр мана, атте. Аттех пулсан...

– Хĕрĕм, ан иккĕлен, – çирĕппĕнех пĕлтерет Луиза Лукинична. – Чăн-чăн аçăвах.

Камитле тĕлпулупа арпашăннă Кăнавал Веналийĕ Кузюкова тепĕр хут алă тытать:

– Акă ман та хуннĕм тупăнчĕ. Муза-Луиза-Лиза чăн та йĕкĕреш пек пит туслă пурăнаççĕ. Ăнлантарам. Муза – сирĕн ача, Луиза – сирĕн арăму, Лиза – ак çак хитре йытă. Виççĕшне те илсе килтĕм хамăр Чĕркуçа.

Савăннă Куçук Куçки ăна хул пуççинчен тĕртет:

– Ах, маттур эс, аçу пекех тавçăруллă. Вĕçлерĕн пуль-ха университетна?

– Аха. Ун хыççăн çулталăк больницăра ĕçлесе малалла вĕрентĕм. Халĕ ак – ялта.

Куçук Куçки каччӑ аллине хы-ытă чăмăртаса мăнаçлăн калаçать:

– Саламлатăп. Ай маттур. Больница çурчĕ те хатĕр. Сава Савви савалаcа-якатса пĕтерчĕ. Сире кĕтетчĕç-ха больницине уçма. Паян – акатуй ячĕпе. Шупашкартан, Вăрнартан пысăк чинсем килсе тулаççĕ ĕнтĕ. Паян Чĕркуç тĕнче усл-

ăхне тухать. Хайĕн чапĕпе. Эй çак, эп мĕн кукалесе тăратăп-ха. Ваттисен йăлипе хăнасене те, сана та çăл куç шывĕ ĕçтерес. Черетпе – пурне те. Ак ку Лизаветине те.

Çемçен хэм! тăвать йытти. Куçук Куçки алтăр йăтса шыва чупать. Баян каласа, юрласа çамрăксем çитеççĕ. Тантăшсем тăваттăн ыталанса ташлаççĕ. Чарăнаççĕ. Сава Савви Веналирен кулать:

– Сăмаварпах çӳрен эс. Хăшĕ мăшăру: çамрăкки-и е ватăраххи?

– Ку артисткăна пĕлетпĕр-ха эпĕр. Çаплах-и, Анат Тули? – Лар Иванĕн те шӳтлес килет пулас.

– Шупашкар балерини, – сулахай куçне мăч хупать Анат Тули.

Çав хушăра Кăнавал Веналийĕ паллаштарса тухать:

– Тус-тантăшсем, хĕрсем, паллашăр: ман пулас арăм – Муза.

– Ырă кун пултăр сире пурне те, – пуçне пĕкет Муза.

– Ку вара, Луиза Лукинична, манăн пулас хуняма.

Сава Савви савăл çапса та хурать:

– Пулас аслати...

– Аван-и, Чĕркуç чĕр куçĕсем? Паллаяс çук кам-кам ачине. Пит чиперккесем, вăр-вар маттур яшсем, – пурне те куçĕпе тĕрĕслесе тухать Луиза Лукинична.

– Ак ку вара, Константин Иванович, манăн пулас хунĕм.

– Ак тамаша! – умма тухса тăрать Анат Тули.

Лили иккĕленӳллĕ сас парать:

– Мĕн, пирĕн Куçкă пичче çак якалти артисткăн ашшĕ-и?

– Тĕнче тепĕр майлă çаврăнса ларчĕ пуль? – сылтăм аллипе çавăрттарса кăтартать Вероника.

Анат Тулипе Муза çине сиввĕн пăхса Люба чĕрине хыпашлать:

– Пулма пултарать. Шан-ха вĕсене, арçынсене. Ак, каллех кунта килчĕ...

– Каçарăр та, – тет Луиза Лукинична, – чăн сăмахăн суйи çук. Эпĕ сирĕн ял шкулĕнче ĕçленĕ чухне çамрăк агрономпа Константин Иванчпа паллашнăччĕ. Костикпа. Куратăр, халĕ – Музăн ашшĕ.

Кузюков кăкăрне çапса кăтартать:

– Ĕненместĕр-и? Чăннипех ман юратнă арăм. Чăн-чăн ман хĕрĕм. Чăн-чăн ман кĕрӳ. Паллашрăмăр-и халь? Çав ятпа çиччас сире...

Сад хуçи çăлкуç шывне пурне те черетпе ĕçтерет. Çамрăксем кĕпĕрленсе юрă юрласа ташлаççĕ.

– Луиза, каçар мана. Эп йăлтах айăплă мар. Ман майра арăм... Пăхмалла марччĕ ун çине... – йăлăнать Куçук Куçки.

Луиза Лукинична алтăр тĕпĕнчи шыва тарăхуллăн сирпĕтет:

– Шывĕшĕн тавтапуç та... Эпĕ, эпĕ хамах айăплă. Çак сад илемне ытараймасăрах сана парăнтăм пулас. Саккунлă качча та каяймарăм. Музăна пĕччен ӳстертĕм. Сан сăн ӳкерчĕкӳ çине пăхса. Хамăн телее тупаймарăм. Арçын телейне. Унăн хăть телейĕ пулĕ-ши?

Куçук Куçки хĕрарăма лăплантарса пуçĕнчен ачашлать:

– Пулĕ-ха, пулĕ. Кăнавалсен йăхĕ – ырă йăх.

– Авă, Анатолий те пур кунта, – баянист енне пăхса ассăн сывлать хĕрарăм. – Иккĕшĕ мăшăр пулаймарĕç. Тур çырман пуль çав. Эп хирĕç марччĕ. Василий Данилович Ачин усламçăпа паллашрĕ те Муза... Тăванĕсем çак ялтанах тенине илтнĕччĕ.

– Ачча Танлин мăнукĕ вăл. Вĕлернĕ терĕç-и-ха ăна? Хаçатра вуланăччĕ. Пĕр

çул пултăрччĕ вĕсен, çĕршыва çаратакансен, халăха нушалантаракансен – тамăк çулĕ. Турра ĕненмесен те, çавăншăн тĕнче вăйне шанса сăхсăхатăп.

Луиза Лукинична куляннă пек те:

– Пире ыр турĕ те çав... анчах тĕп турĕç. Хăйсен компанийĕнченех. Вĕсене мул çитмест-çке, влаç çитмест. Акă халь Муза Веналипе паллашрĕ. Туйне ялта тăватпăр тесе килĕшрĕç. Мĕн пулса тухĕ ĕнтĕ.

Вĕсем патне çывхарнă Анат Тули баянне хыттăн туртать:

– Эх, туй тăватпăр! Хамăр тусăн туйне кĕрлеттеретпĕр! Веналий авланать. Муза качча каять. Эх! Хоппа! Ма юрлас мар, савăнас мар:

Пахчари хĕрлĕ улмийĕ
Илĕртет мана.
Улмуççи айĕнчи хĕрĕ
Çунтарать чуна.

Ун çумне ял «артисчĕсем» хутшăнаççĕ:

Тăван килĕн çăкăрĕ
Тут парать мана.
Тăван аннемĕн кăкăрĕ
Вăй кĕртет чуна.
Чĕркуç шывĕ – чĕрĕ шыв,
Эсĕ – ман тăван çĕршыв.

Куçук Куçки икĕ аллине те çĕклесе хаваслантарать:

– Çамрăк гварди, ну-ка, Америкăна, Кубăна, Китая вĕçтерĕр! Хĕрсем – вĕсем хыççăн!

Каччăсемпе хĕрсем пĕтрен çимелли-ĕçмелли йăтса тухаççĕ, сĕтел майлаштараççĕ. Куçук Куçкипе Луиза Лукинична валак патнелле утса каяççĕ. Мĕкĕте тимĕрçĕн лаççинчен мăлатук сасси илтĕнет. Шăпчăксем ăмăртмалла юрлаççĕ. Вĕлтĕр вĕçен кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Шапасем те вĕсем çумне хутшăннă.

– Мана халь Чĕркуç çыннисем умне тухма та намăс пуль? - вăтанчăкне пытараймасть Луиза Лукинична. – Паллакансем пурах ĕнтĕ. Хам вĕрентнĕ ачасем те...

– Намăсси-симĕсси... Пурнăç авăрĕнче унта такам та темле те пăтранать, - алă сулать Кузюков.

– Пурпĕрех хама-хам темле... Намăсĕ ĕнтĕ... Ялтан упăшкасăр мăн хырăмпа тухса кайнăшăн. Хĕрле ача çуратнăшăн.

Аларан хытă çавăрса тытнă Куçук Куçки хĕрарăма куçпа шăтарать:

– Ача çуратнăшăн хĕрарăма намăс мар. Мухтав. Ах, пĕлтермен вĕт мана. Пулăшаттăмччĕ сире.

– Арăмлă çынна чăрмантарас мар терĕм-çке.

Хăйне чĕреренех чавса илнипе вăйсăрланнă Куçук Куçки сассине хулленлетет:

– Эх, вăл арăмпа – ăнланман хĕрарăмпа. Чăвашăн чăвашах илмелле иккен. Чăвашăн – чăвашах качча тухмалла. Пĕр наци çынни пĕрне-пĕри юнпа ăнланать. Кайрĕ вăл манран уйрăлса, виççĕмĕш хут – окончательно и бесповоротно. Тахçан авалах.

– Пĕчченех пурăнатăн-и вара?

Куçук Куçки çамрăксенчен вăтанмасăрах хĕрарăма ыталать:

– Пĕчченех мар та... Ял-йышпа, çак çамрăксемпе, ак çак садпа, ак çак çăлкуçпа.

Хăй çумне пăчăртакан Кузюкова Луиза Лукинична ячĕшĕн тĕртсе уйăрам пекки тăвать:

– Ачасенчен вăтанар, ухмах ват супнă.

Хăюлланнă Кузюков тепĕр хут çавăрса илет те ăна тĕлли-паллисĕр чуп тăвать:

– Вăтанмастăп. Çирĕм пилĕк çул курман хамăн арăма мĕн пур ял халăхĕ умĕнче ыталаса чуп тăватăп. Тĕнче умĕнче. Ак çапла.

Хĕрарăм та хирĕçлемесĕрех ăна меллĕн чуп тăвать:

– Манăн упăшках-ши вара эсĕ? Хут уйăрттармасăрах. Ах...Юратма пăрахаймарăм сана, Костя.

– Эпĕ те çаплах. Хамăн çамрăк арăма – чăваш арăмне – тек ялтан ниçта та кăларса ямастăп.

– Чăнах-и?

– Ачу та ялтах пулать халь. Ăна валли илем шкулĕнче, вăтам шкулта, ача садĕнче вырăн пур. Шăпах вăхăтра килчĕ. Атту çын шыратчĕç. Кирлĕ пулсан Вăрнара та ĕçлеме çÿрĕ. Автобус чупать. Ху та ачасене вĕрентме пуçлатăн ак. Сан валли те уроксем тупăнĕç. Ĕçлекеншĕн ялта кунта яланах ĕç вырăнĕ пур. Пирĕн пуçлăх Илле Лексантăрĕ ял пуласлăхĕн, ял çыннин телейĕшĕн чунне пама хатĕр. Авă мĕнле вăл ял патши!

Сава Савви сасси илтĕнет:

– Эй, унта эсир, ваттисем-çамрăккисем. Çăлкуçне куçăхтарса типĕтсе ан лартăр! Кунталла кăштăртатăр. Кĕреке пуçĕ çитмест.

Акă часах Куçук Куçки Луиза Лукиничнана хăйпе юнашар вырнаçтарса лартать. Сава Савви черккесене эрех ярса тухать. Куçук Куçки ура çине тăрать те:

– Хаклă ачасем, тăвансем, хăнасем! – тесе чĕнсе калать. – Сăваплă вырăнта пурте пĕрле пухăннă чух çак черккене хамăр несĕлсемшĕн – кашкăр йăхĕсемшĕн – пире чĕрĕ шыв парса тăракан тăван çĕршĕн, ăшăтса тăракан сутă хĕвелшĕн, юрату ытамне илекен тулли уйăхшăн, хамăрăн сывлăхшăн, малашлăхшăн ĕçес килет. Тав пурне те!

Пурте ĕçсе панă хыççăн Анат Тули баянне майлаштарса калама пуçлать, «Эх! Хопа!» тесе юрласа ярать: «Урхамахсем тăраç тапăртатса...» Сĕтел хушшинчен сиксе тухнă Муза ташша ярсанах вăл çеммине улăштарать. Муза хыççăн Кăнавал Веналийĕ, унтан Лар Иванĕпе Вероника, Сава Саввипе Лили, Куçук Куçкипе Луиза Лукинична çерем çине тухаççĕ. Люба та каччи тавра ташласа çаврăнать. Лиза баяниста пулăшса вĕрет. Акă Анат Тули ташăваррине куçать, ăна хĕрсем черетпе ыталаса çавăрттараççĕ. Муза хыççăн - Люба... Баянист кĕвве майĕпен юрă çеммине куçарать:

Чĕкеç патне чĕкеç пуçтарăнсан...

Анатолий Микитов çăлкуç патнелле çывхарать те пурте валака сырса илеççĕ. Акатуй юрри янăрать:

Сĕр-аннемĕн çăкарĕ
Тут парать мана.
Сĕр-аннемĕн кăкарĕ
Вăй кĕртет чуна.
Чĕркуç шывĕ - чĕрĕ шыв,
Эсĕ – ман тăван çĕршыв.

2007 çул